ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
28
ШĂМАТКУН
№ 232 (9141)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).

Хамăр республикăра (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Шăмăршă районĕнчи парторганизацин конференцийĕ (2 стр.).

Я. Васильев.—Пропагандистсен кадрĕсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла (2 стр.).

В. Иваншков.—Çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесçĕ. (2 стр.).

Н. Орлов.—Тивĕçлипе ертсе пымасан (2 стр.).

ВЫРĂНТИ СОВЕТСЕНЧЕ. Шупашкар хула совечĕн сессийĕ (3 стр.).

Шупашкарти пир-авăр комбинатне хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа тăвар! «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕнчи хуçалăх активĕн пухăвĕнчен (3 стр.).

Илья Эренбург Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕнче 1953 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче каланă сăмах (4 стр.).

А. Сурков Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕнче 1953 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче каланă сăмах (4 стр.).

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ (4 стр.).

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса пачĕ. «Халăх хуçалăхĕнче ертсе пыракан вăй пулса тăракан социализмла индустрие хăватлăн аталантарса пынă никĕс çинче хамăр çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай пулмалла тăвас задачăна ĕçре татса парасси—коммунизм строительстви программин чи кирлĕ пайĕ пулса тăрать», тенĕ Пленум постановленийĕнче. Пленум мĕнпур колхозниксене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тата творчествăлла пуçарулăха сарса яма чĕнчĕ.

Кун хыççăн СССР Министрĕсен Совечĕпе БПСС Центральнăй Комитечĕ «Çĕршывра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантармалли мерăсем çинчен тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли нормăсене чакарасси çинчен» решени йышăнчĕç.

Партипе правительство совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культура шайне ÿстерме хытă тăрăшнипе хавхаланса, республикăри ĕççыннисем государство заданийĕсене хăвăртрах тата лайăх пурнăçлассишĕн тимлĕ ĕçлессĕ. Колхозсемпе совхозсем, колхозниксем, ытти ĕççыннисен хуçалăхĕсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарассĕ. Республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли çулталăкри плана аш-какай енĕпе 104 процент, шултра выльăхсен тирĕсем енĕпе—108 процент тултарчĕç. Колхозниксем чăх, хур-кăвакал çăмарти планпа палăртнинчен чылай нумайрах пачĕç. Республикăри совхозсем çăм памалли плана 175 процент тултарчĕç. Канаш районĕнчи колхозсем, колхозниксен тата ытти ĕççыннисен хуçалăхĕсем республикăра пуринчен маларах çăм парса татрĕç. Улатăр, Чкаловски тата Шăхасан районĕсем обязательнăй йĕркепе аш-какай памалли плана та, хатĕрлев енĕпе сутмалли задание те срокчен пурнăçларĕç. Красноармейски районĕ çăмарта памалли плана ăнăçлă тултарчĕ.

Çапах та, пĕтĕмĕшпе илсен, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç республикăра кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Çак ĕçе Первомайски, Буславкка, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсенче тата ытти хăшпĕр районсенче уйрăмах начар организациленĕ. Акă, Йĕпреç районне илер-ха. Ку районта хатĕрлев планĕсене ăнăçлă тултарма пур условисем те пур. Анчах район ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана аш-какай парас енĕпе 74 процент, çăмарта хатĕрлес енĕпе—86 процент, сĕт тăратас енĕпе 94 процент, çăм парас енĕпе 77 процент кăна пурнăçларĕ. Район тĕрлĕ тирсем тата ытти чĕртавар хатĕрлес енĕпе те кая юлчĕ. Районти колхозниксен тата ытти ĕççыннисен хуçалăхĕсенчен 37 процентĕ аш-какай, 15 процентĕ сĕт тата 20 процентĕ çăмарта парса татман.

Юлашки вăхăтра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç Буславкка районĕнче начарланчĕ. Ноябрь уйăхĕнчи çирĕм кун хушшинче районта аш-какай, сĕт, çăмарта, çăм питех те сахал хатĕрленĕ, нумай чĕртаварсем хатĕрлес тĕлĕшпе пачах ĕçлемен. Районта 25 колхоз, вĕсенчен 21 колхоз аш-какай, 16 колхоз çăмарта, 23 колхоз сĕт памалли заданисене пурнăçламан. Районта тĕрлĕ тирсем хатĕрлес ĕç япăх тăрать.

Мĕншĕн-ха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç начар тăрать?

Нумай районсенче çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Хатĕрлев организацийĕсен — «Маслопром», «Заготскот», «Заготживсырье» уйрăмĕсен тата райпотребсоюзсен руководителĕсем пĕтĕм ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Вĕсем кашни колхоз, колхозниксемпе ытти ĕççыннисен кашни хуçалăхĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе государство умĕнчи обязательствăсене тултарчăр тесе тимлĕ тăрăшмаççĕ. Кунта асăннă тĕслĕхсенчен чылай районсенчи партипе совет органĕсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсемпе чĕртавар хатĕрлес ĕç çине çиелтен пăхни, хатĕрлев организацийĕсен ĕçĕсене тĕтăшах тĕрĕслесе тăманни курăнать.

Правительство панă кăтарту тăрăх, колхозсем, çак çулшăн халиччен çăм парса татман пулсан, ун вырăнне аш-какай тата тир, сĕт вырăнне—сысна ашĕ, çăмарта вырăнне—аш-какай, сĕт, çĕрулми тата ытти продуктсем пама пултараççĕ. Анчах çак ĕçе чылай районсенче япăх йĕркеленĕ.

Хатĕрлев организацийĕсем государство валли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутăн илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлессĕ. Аш-какай сутăн илсе хатĕрлемелли плана 87,5 процент, сĕт хатĕрлемелли плана 66,6 процент çеç тултарнă. Çав та, потребительсен кооперацийĕ аш-какай хатĕрлемелли плана 104,5 процент тултарнă. Анчах республикăри «Маслопром» тресчĕ сĕт сутăн илмелли тата «Заготскот» кантурĕ аш-какай сутăн илмелли плансене начар пурнăçласа пыраççĕ. «Заготскот» кантурĕн кăçал 5.000 центнер аш-какай сутăн илсе хатĕрлемелле, анчах ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 2.677 центнер çеç сутăн илнĕ. Октябрьски, Чурачăк, Тăвай тата Буславкка районĕсенче колхозсемпе договор туса аш-какай хатĕрлес ĕçе пачах организацилемен. «Маслопром» тресчĕн кăçал 17.475 гектолитр сĕт сутăн илсе хатĕрлемелле, анчах ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 7.500 гектолитр çеç хатĕрленĕ. Колхозсемпе договор туса аш-какайпа сĕт сутăн илес ĕç çакăн пек япăх пынине текех тÿсме çук. Продуктсем сутăн илсе хатĕрлес ĕçе тĕпренех лайăхлатас пулать.

Çулталăк вĕçленесси нумай юлмарĕ. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Государство планне пур йышши продуктсем хатĕрлес енĕпе те пĕтĕмпех тултармалла. Çав шутпа хатĕрлев организацийĕсенче ĕçлекен кашни работникăн ответлăхне ÿстермелле. Колхозсемпе совхозсем хушшинче, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама тивĕçлĕ ĕççыннисем хушшинче дисциплинăна çирĕплетмелле. Государство дисциплинине пăснисене, ответсăрлăха тата йĕркесĕрлĕхе татăклăнах пĕтермелле.

Партипе совет органĕсен хатĕрлев организацийĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслемелле. Хатĕрлев работникĕсем хушшинче политикăлла воспитани ĕçне вăйлатас пулать. Вĕсенчен кашниех ун çине мĕн тери ответлă ĕç хунине пĕтĕмпех ăнланса илтĕр, хăйне шанса панă ĕçе юраттăр, вăхăтра тата тĕплĕн пурнăçласа пытăр. Хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлессине анлă сармалла. Çавăнпа пĕрлех политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатса, кашни колхозника тата ялхуçалăх продукчĕсем пама тивĕçлĕ кашни ĕççыннине государство умĕнчи тивĕçĕ çинчен астутарса тăрас пулать. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама, паха продуктсем пама кирлине лайăх ăнланса илччĕр.

Пирĕн обществăри условисенче социализм строительствин кашни участокĕнчех ĕçри лайăх тĕслĕх калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна асра тытса, хатĕрлев ĕçĕнче малта пыракансен опытне пур çĕре те сарас пулать. Пур работниксем те малта пыракансем пек ĕçлеме вĕренччĕр.

Хатĕрлев ĕçĕнчи расходсем халĕ те пысăк-ха. Çакă вара хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсене укça-тенкĕ расходламалли йĕркене, перекетлĕх режимне çирĕппĕн пурнăçласа пыма хушать. Çавăн пекех хатĕрлев пункчĕсен ĕçне лайăх организацилемелле. Çав пунктсенче выльăх пама, сĕт-çу тата ытти продуктсем пама пыракан кашни ĕççынна кăмăллă кĕтсе илччĕр.

Халăха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, çăмăл промышленноçа чĕртавар нумайрах парса тăма выльăх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пымалла, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмпех тултармалла.

* * *

Суту-илÿ работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Ĕнер, ноябрĕн 27-мĕшĕнче, Шупашкарта Советсен çуртĕнче суту-илÿ работникĕсемпе столовăйсенче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ.

Канашлу ĕçне суту-илÿ предприятийĕсен руководителĕсем, базăсемпе столовăйсенче ĕçлекенсем, магазинсен заведующийĕсем, малта пыракан продавецсем, Суту-илÿ министерствипе Чăвашпотребсоюзри ертсе пыракан работниксем, райсоветсемпе хула Совет исполкомĕсен суту-илÿ пайĕсен заведующийĕсем, КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсем, Вырăнти тата топливо промышленность министерствин, Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин, Чăвашпромсоветăн представителĕсем т. ыт. те хутшăнаççĕ.

Канашлура «СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе суту-илÿ работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен» Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ П. В. Заикин юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн пренисем пуçланчĕç.

Паян канашлу малалла ĕçлет.

Ялхуçалăхне вăйлатма

Горькири Молотов ячĕпе тăракан автомобиль заводĕн коллективĕ облаçри чылай МТС-сене шефа илнĕ. Предприяти икĕ машина-трактор станцине инструментсем нумай ярса панă. Çавăн пекех станоксем валли запаслă пайсем чылай хатĕрленĕ.

Заводри слесарьсен, электриксен тата ытти специалистсен бригадисем МТС-сенче тракторсемпе комбайнсем юсама пулăшаççĕ.

Ереванри электромеханически завод работникĕсем Эчмиадзин машина-трактор станцине «Универсал» тракторсене юсама пулăшнă. Халĕ комбайнсене, сеялкăсене, культиваторсене юсаса пĕтереççĕ. Предприяти коллективĕ МТС мастерскойне инструментсем, ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсем нумай туса панă.

Ереванри сĕтел-пукан фабрики хăй шефа илнĕ колхоза—Октемберянски районĕнчи Ехекнут ялне платниксен бригади янă. Бригадăри 20 платник колхозри строительство бригадине ĕне вити тата сурăх витисем тăвас ĕçре пулăшнă. Халĕ фабрикăра колхозри çĕнĕ стройкăсем валли чÿрече рамисем тата алăксем 100 ытла хатĕрлеççĕ.

Тулăри самоходнăй комбайнсем тăвакан завод коллективĕ Тула районĕнчи Тельман ячĕпе тăракан тата «Вперед к победам» колхозсене платниксемпе çурт çине витекенсен бригадисем янă. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх витисене юсанă çĕрте нумай ĕç тунă. Заводăн строительство бригади хальхи вăхăтра Тула МТС-ĕнчи механизаторсем валли общежити, столовăй тата хĕрлĕ кĕтес тăвать. Çул-йĕр министерствин Тулăри ремонтно-механически заводĕнчи рабочисен ушкăнĕсем Ленински районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх сурчĕсене хĕле хатĕрлеме пулăшнă. Тулăри «Красный Октябрь» заводри рабочисем ноябрь уйăхĕнче Одоевски МТС-а станоксем юсаса панă.

Пятигорскри моторсем юсакан завод МТС-сем валли бензин тултармалли цистернăсем тумалли çулталăкри плана срокчен пурнăçланă. Килес çул кун пек цистернăсем тата ытларах тăваççĕ.

Курган облаçĕнчи предприятисем колхозсене шефа илсе пулăшас ĕçе вăйлатса пыраççĕ. Рабочисен вуншар бригадисем колхозсене кайса, выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилеме тата электрификацилеме пулăшаççĕ. (ТАСС).

Мускав. «Моспроект» институчĕн 5-мĕш мастерскойĕнче.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: мастерскойри архитекторсен ушкăнĕ Мускаври Добрынински площадь мĕнле пулмалли çинчен сÿтсе явать. Варринчи—мастерской руководителĕ, СССР Архитектура академийĕн член-корреспонденчĕ, Сталинла премин лауреачĕ Г. А. Захаров.

Н. ГРАНОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

* * *

Халăх валли таварсем

КАРАГАНДА. Облаçри вырăнти промышленность халăх валли таварсем туса кăларассине ÿстерсе пырать. Карагандари промкомбинатсем тимĕр кроватьсем, сĕтел-пукан, çăматă, çĕленĕ тумтир, илемлĕ япаласем, ачасене валли теттесем, килте кирлĕ нумай тĕрлĕ япаласем туса кăлараççĕ.

Кунти йывăç япаласем тăвакан комбинат кĕнекесем усрамалли шкафсем, дивансем, сĕтелсем туса кăларать. Кунтах никельпе витнĕ кроватьсем туса кăларакан цех уçăлать. Предприяти коллективĕ çулталăкри плана срокчен пурнăçланă.

Кировски промкомбинат работникĕсем кĕççе тума тытăннă. Колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем панă заказсем тăрăх горючи усрамалли цистернăсемпе баксем туса кăлараççĕ.

Балхаш хулинчи промкомбинат ачасене валли теттесем тăвакан цех уçнă.

Кăçал вырăнти промышленность предприятийĕсем иртнĕ çулхинчен 4,5 миллион тенкĕлĕх ытларах таварсем туса кăларнă.

ВИЛЬНЮС. Литвари консерв промышленность предприятийĕсем улма-çырларан тата пахча çимĕçсенчен консерв туса кăларассине ÿстернĕ. Кăçал консерв иртнĕ çулхинчен икĕ хут нумайрах туса кăларнă. Продукци ассортименчĕ нумайланнă. Яшка пĕçермелли концентратсем, типĕ кĕсел, улма-çырла сĕткенĕсем, каринованнăй пахча çимĕçсемпе улма-çырласем туса кăларма тытăннă.

ПРИМОРСК (Ленинград облаçĕ). Приморскинчи пулă комбинатĕнче ĕçлекенсем, инженерсемпе тата техниксемпе пĕрле, производствăри чылай ĕçсене лайăхлатнă. Пулă коптить тăвакан тата консервсем хатĕрлекен цехсем продукци туса кăларасси виçĕ хут ÿснĕ.

Комбинат коллективĕ çулталăкри плана тултарнă. Кăçал, 1952 çулхипе танлаштарсан, консервсем 0,5 миллион банка ытларах туса кăларнă. Çулталăк вĕçлениччен комбинат тата 400 пин банкăран сахал мар консервсем туса кăларать.

Ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС).

Латви ССР-ĕнчи малта пыракан рабочисен пухăвĕ

РИГА, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер профсоюзсен культура çуртĕнче республикăри малта пыракан рабочисен пухăвĕ пулнă,— çак пухăва Латви ССР Министрĕсен Совечĕпе Латвири профсоюзсен совечĕ пухнă. Пухура халăх хуçалăх планне срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлес енĕпе производствăра малта пыракансем умĕнче тăракан задачăсем çинчен республикăри профсовет председателĕ Вольтман юлташ доклад тунă.

Пуху хыççăн Латви ССР-ĕнчи чи лайăх рабочисене Хисеп грамотисем панă.

Механизаторсен поселокĕсем

АЛМА-АТА, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Казахстанра машина-трактор станцийĕсен тата машинăсемпе ĕçлесе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пулăшакан станцисен çĕнĕ поселокĕсене тума тытăннă. Кашни поселокрах пĕрер хватерлĕ пилĕк çурт, икшер хватерлĕ çирĕм çурт, икĕ хутлă общежити, клуб, ача сачĕ тата ача ясли, мунча тата ытти культурăпа йăла учрежденийĕсем пулаççĕ. Поселоксене телефон тата радио кĕртеççĕ. Кашни поселокрах йывăçсем нумай лартса ÿстереççĕ.

Алма-Ата облаçĕнчи Талгарски МТС-ра икĕ хватерлĕ пĕрремĕш çурт туса пĕтернĕ. Ытти МТС-сенче тата МЖС-сенче (машинно-животноводчески станцисенче) 18 çурт туса пĕтернĕ, вĕсенче пурăнмалли лаптăк 1.115 тăваткал метр шутланать.

Тĕштырă совхозĕсем çуракине хатĕрленеççĕ

СТАВРОПОЛЬ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Крайри тĕштырă совхозĕсем çуракине хатĕрлеме тытăннă. Совхозсем пурте сортлă вăрлăхсем кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ, халĕ вĕсене акма юрăхлă кондицие çитерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Совхозсенче машинăсене юсаççĕ. Юсас ĕçе узловой меслетпе йĕркеленĕ. Çак вăхăт тĕлне механизаторсем икĕ уйăхри план тăрăх палăртнинчен 1,5 хут нумайрах комбайнсем юсанă.

Пур çĕрте те тракторсене, комбайнсене тата тăпрана кăпкалатмалли машинăсене январĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Хамăр республикăра

Çамрăк шахтерсем

Икĕ çул каялла Алексей Пантелеймонов колхозра тăрăшса ĕçлетчĕ. Унăн шахтер пулас ĕмĕт пулнă. Çавăнпа вăл 1951 çулта ФЗО шкулне вĕренме кайма кăмăл турĕ. Комисси ăна сăрт-ту промышленноçĕнче ĕçлеме вĕренме янă.

Прокопьевск хулинче ултă уйăх вĕреннĕ хыççăн, Алексей шахтăра проходчик пулса ĕçлеме пуçлать. Вăл сменăри нормăна яланах иртттерсе тултарать.

Икĕ çул хушши А. Пантелеймонов тăванĕсемпе çыру тăрăх кăна çыхăну тытнă. Юлашки çырура яла отпуска пырасси çинчен çырса пĕлтернĕ. Ун хыççăнах вăл киле çитрĕ.

Часах вĕсем патне ялйышсем пухăнчĕç. Алексей Пантелеймонов шахтерсен пурнăçĕ çинчен питĕ лайăх каласа пачĕ.

Пирĕн ялти Василий Матвеев та пĕлтĕр ФЗО шкулне вĕренме кайрĕ. Вăл та шахтер пулчĕ. Ноябрь уйăхĕнче тăван ялне отпуска килчĕ. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те отпускра тăван ялта канаççĕ. Вĕсем ĕçре те, отпускра та пĕрле.

Ялти колхозниксем, вĕсем çине пăхса савăнаççĕ. Пирĕн ялтан та шахтерсем тухрĕç, маттур çамрăксем, теççĕ.

Халĕ пирĕн ялта чылай çамрăксем шахтер пулма ФЗО шкулĕсене вĕренме кайма кăмăл тăваççĕ. Вĕсем вĕренсе Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ырми-канми ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

Тăвай районĕ,
Ураскасси ялĕ.

Çĕнĕ мастерской

МУРКАШ. Машина-трактор станцинче кăçал типовăй мастерской туса пĕтерчĕç. Мастерскойра пĕр вăхăтрах 50 трактор юсама пулать. Çавăнпа пĕрлех мастерской валли 45 лаша вăйлĕ дизель-двигатель илсе килнĕ. Вăл электроэнерги çителĕклĕ парса тăрать.

С. ТИХОНОВ.

Республикăри колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем сутса автомашинăсем туянаççĕ. Кăçал Чăвашпотребсоюз колхозсене груз турттармалли 160 машина тата çăмăл автомашинăсем 15 сутнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ М. А. Теньков тата С. С. Карлин шофер колхоз валли «ГАЗ-67» машина илеççĕ. Ку колхоз кăçал государствăна сĕт сутса икĕ машина туяннă. Унăн пурĕ 4 автомашина.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

* * *

Шефсен пулăшăвĕ

КУКЕÇ. Пирĕн район республикăри пысăк хула—Шупашкар çывăхĕнчи район. Хула çывăхĕнчи «Красный флот», Молотов ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан, «Родина», Хрущев ячĕпе тăракан колхозсем хулари ĕççыннисене çулсеренех ытларах та ытларах пахча çимĕç, сĕт-çу, аш-какай тата ытти продуктсем парса тăраççĕ.

Хулари чылай предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем çак колхозсене шефа илсе пысăк пулăшу пачĕç. Педагогика институтĕнчи студентсем Фрунзе ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрулми кăларма пулăшрĕç. Промышленность предприятисем колхозсене тĕрлĕрен двигательсем, автомашинăсем, ялхуçалăх машинисем юсама пулăшаççĕ. Аслă шкулсенчи работниксем колхозсене пырса лекцисемпе докладсем, каласусем иртттереççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ пулнă хыççăн хулари электростанцисенчен Крупская ячĕпе, Калинин ячĕпе, Ильич ячĕпе, Чкалов ячĕпе тăракан колхозсене электрификацилеме палăртнă. Çак колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче нумай ĕçсене электрификацилемелле.

Çавăн пекех Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ Чапаев ячĕпе тăракан тата «Красный флот» колхозсенче пысăк теплицăсем тума пулăшать.

П. ЕФРЕМОВ.

Шкулпа çемье хушшинчи çыхăну

СОВЕТСКИ. Хучашри çичĕ çул вĕренмелли шкула пилĕк ялти ачасем вĕренме çÿреççĕ. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа кашни класс руководителĕ хăйĕн класĕнче вĕренекен ачасен килĕнче пулса, вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçнă, килте вĕренмелли условисемпе паллашнă.

Учительсен коллективĕ, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçнисĕр пуçне, вĕсемпе вăхăтран вăхăта пухусем те иртттерет. Çак кунсенче Хурамалăх, Алешкин, Анат Явăш, Хĕрлĕсир тата Хучаш ялĕсенче вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе пухусем иртттерчĕç. Пухусенче «Тĕнчери лару-тăру», «Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх пурнăçне малалла лайăхлатассишĕн тăрăшни» темăсемпе, тата К. Е. Ворошилов юлташ Мускав Совечĕн савăнăçлă ларăвĕнче Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарни çинчен тунă доклад тăрăх докладсем итлерĕç. Çавăн пекех «Шкулпа çемьен ачасене вĕрентсе ÿстерес ĕçри пĕрлĕхĕ», «Ялти шкулта ачасене политехникăлла пĕлÿ парасси» темăсемпе докладсем пулчĕç.

Çавăн пекех вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем шкулти художествăлла пултарулăх кружокĕсем панă концертсене курчĕç. Шкулпа çемье хушшинчи çыхăнăва тăтăшах вăйлатса пыни вĕренÿ пахалăхне ÿстерме, дисциплинăна лайăхлатма пулăшать.

А. СМИРНОВ.

Куçса çÿрекен электростанци

ОКТЯБРЬСКИ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилес шутпа ДСС-3 йышши куçса çÿрекен электростанци туянчĕ. Халĕ колхозниксем хăйсен килĕсене электричество сути кĕртме юпасем лартма тытăнчĕç. Шыв арманĕпе çăм арманне электричествăпа ĕçлеттерме палăртрĕç.

В. ТРОФИМОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шăмăршă районĕнчи парторганизацин конференцийĕ

Районти парторганизацин конференцийĕнче парти райкомĕн ĕçĕсем çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ А. Иванов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата пренире тухса калаçнисем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пропагандăласси, çак решенисенчен тухса тăракан задачăсене пурнăçласси ытла та çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕç.

Коновалов юлташ хăшпĕр колхозсенчи парторганизацисем партилле-политикăлла тата агитацилле-массăлла ĕçе тивĕçлипе ертсе пыманни çинчен каларĕ.

— Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха опытне тĕпчесе пĕтĕçтерĕс, çавăн пекех наука çитĕнĕвĕсене колхозниксем хушшинче сарас ĕç начар пулса пырать, хăшпĕр парторганизацисем çак ĕçрен пăрăнса тăраççĕ. Коммунистсен производствăри авангардлă рольне ÿстерме тăрăшмаççĕ.

КПСС райкомĕ ялхуçалăх работникĕсем хушшинче воспитани ĕçне туса пыма конкретлă мерăсем йышăнман. Чылай чухне райком йышăннă паха решенисем хут çинче кăна тăрса юлаççĕ, çак решенисене тивĕçлĕ организацисемпе колхозсене вăхăтра çитермеççĕ. Çавна пула нумай решенисем пурнăçланмаççĕ.

МТС директорĕ Иванов, «Кзыл юл» колхоз председателĕ Балаков юлташсем çĕрĕç культури çителĕксĕр пулнине асăрхаттарчĕç. Колхозсем минераллă удобренисем вăхăтра кÿрсе килмеççĕ, ялхуçалăх машинисемпе тивĕçлипе усă курмаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕне уйăн тухăçлăхне ÿстересси районти колхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Анчах район ку енĕпе уйрăмах юлса пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тăракан задачăсене парти райкомĕн пленумĕсенче тата районта пулса иртнĕ тĕрлĕ пухусемпе канашлусенче темиçе хутчен те сÿтсе явнă, лайăх решенисем йышăннă. Анчах çак решенисене нумайăшне пурнăçламан. Чылай çĕрте выльăх-чĕрлĕхе усрама витесем сахал, выльăх апачĕне перекетлĕн усă курмаççĕ.

Нумай делегатсем КПСС райкомне районти парторганизацире парти вĕренĕвне начар йĕркеленĕшĕн критиклерĕç, коммунистсен идейăлла-политикăлла шайне ÿстерес енĕпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Политшкулсемпе кружоксенче иртерекен занятисен пахалăхĕшĕн хăшпĕр коммунистсем тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Занятисене идея тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр пусăмра иртернисем те пулкаланă. Ленин ячĕпе, Молотов ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацинче коммунистсен вĕренĕвне уйрăмах начар йĕркеленĕ. Парти вĕренĕвне татăклăн лайăхлатма ку таранччен те мерăсем йышăнман.

Районта 500 агитатор ытла. Анчах агитаторсене парти райкомĕ енчен конкретлă пулăшу пани çук. Вĕсем ĕçсыннисем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе туса пыма тĕрлĕрен кампанисем иртернĕ вăхăтра кăна хутшăнаççĕ. «Кзыл юл», «Путь коммунизма» колхозсенче агитколлективăн ĕç планĕ çук. Политикăлла агитаци кунта паянхи куна нимĕнле те тивĕçтермест. Районти лекторсен ушкăнĕ начар ĕçлет. Штатра тăман лекторсене ĕçре конкретлă пулăшу памаççĕ.

Конференцире çавăн пекех районти сутă-илÿ организацийĕсем ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе начар ĕçленине палăртрĕç.

Доклад тăрăх 20 çын тухса каларĕ. Конференци районти хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырассине лайăхлатас тĕлĕшпе решени йышăнчĕ.

Парти райкомĕн организациллĕ пленумĕ КПСС райкомĕн секретарĕ пулма А. М. Иванов юлташа, райком секретарĕсем пулма В. С. Атлашева тата Е. М. Соргина юлташсене суйларĕ.

Пропагандист тăрăшнă çĕрте

«Перламутр» колхозри коммунистсемпе комсомолецсем, партире тăман активистсем хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе кăçал парти историне вĕренме кăмăлланă. Вĕренме пурĕ 12 çын çырăннă. Вĕсен политикăлла тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕсем пĕр пекрех.

Занятисем палăртнă кунсенче пулаççĕ. Вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах занятисене вĕренекенсем пурте йĕркеллĕ çÿреççĕ. Ку таранччен 7 занятиĕ пулнă. Иртнĕ занятинче кружок руководителĕ И. Кузнецов юлташ «Российăра крепостной правăна пăрахăçа кăларни тата промышленноçра капитализм аталанни» тема тăрăх калаçу иртерчĕ.

Пропагандист кашни темăпах калаçу планĕ тата конспект тăвать. Вĕренекенсем материала тĕплĕнрех ăнланччăр тесе, хăйĕн калаçăвне районти тата хăйсен колхозĕнчи фактсемпе пуянлатать. Сăмахран, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕнче каланă сăмаха ăнлантарса панă чухне «Перламутр» колхозăн çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен, колхозниксем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа панă, районти ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланнине кăтартакан фактсемпе паллаштарнă.

— Вĕренекенсене темăна лайăх ăнланма пулăшасси пропагандистăн тивĕçĕ. Çавăнпа та эпĕ занятисене иртерме тĕплĕн хатĕрленетĕп. Хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ материалсемпе консультацисене тăтăшах вулатăп. Çакă мана занятисене ăнăçлă иртерме пулăшать,— тет Кузнецов юлташ.

Вĕренекенсен активлăхĕ пысăк. Вĕсем килте литература вуласа конспектсем çыраççĕ тата ăнланман ыйтусене çырса пыраççĕ. Занятисенчи калаçусене пурте хутшăнаççĕ. Вĕренекен ыйту парсан, пропагандист ун çине хăй ответлеме тăхтаса тăрать, çав ыйтăва татса пама вĕренекенсене хăйсене ирĕк парать. Юлашкинчен пропагандист пурин калаçăвне те хăй пĕтĕçтерсе парать. Кам та пулин йăнăшрах каланă пулсан, ăна тÿрлетет. Çавăнпа та кружок занятийĕсенче тухса калаçма именсе тăракансем çук.

Пропагандистпа вĕренекенсем хушшинче çирĕп туслăх пулни кашни темăна тĕплĕн ăнланма май парать. Пропагандист вĕренекенсемпе занятие вăхăтĕнче çеç калаçмасть, ытти чухне те занятисене хатĕрленме пулăшать, конспектсем тума хăнăхтарать. Çапла ĕçленине пула уйрăмах А. Николаев, К. Дмитриева, Р. Григорьева, К. Осипова юлташсем ыйтусене тарăнрах ăнланма пуçларĕç, вĕсем артель членĕсем хушшинче политикăлла калаçусем ытларах иртерме тытăнчĕç. Çакна май артель ĕçĕсем те чылай лайăхланма пуçларĕç.

С. ШАДИН.

Сĕрпÿ районĕ.

Партипе совет активĕ ялхуçалăх производствине вĕренет

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). КПСС райкомĕ районти партипе совет активне ялхуçалăх производствине вĕрентме ялан ĕçлекен семинар йĕркелерĕ.

Семинарта халĕ 4 занятиĕ пулса иртнĕ. Унта КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени, ялхуçалăх артелĕ социализм вăхăтĕнче коллективлă хуçалăхăн тĕп форми пулса тăни, çĕрулмипе тăваткал тĕмĕн лартасси тата колхозсен хуçалăхне малалла аталантармалли плансем тăвасси çинчен лекцисем вуланă.

Юлашки лекци уйрăмах интереслĕ иртрĕ. «Знамя коммунизма» колхоз агрономĕ Н. Дмитриев юлташ артеле 1954—1956 çулсенче аталантармалли перспективлă план çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Çак план тăрăх 3 çул хушшинче уй-хиртен илекен тупăш 7 хут, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш 20 хут ытла ÿсмелле, тупăшсен хисепĕ 1.800 пин тенкĕрен иртмелле. Çакă вара колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх 3 килограмм тĕштырă, 3 килограмм çĕрулмипе пахча çимĕçĕ, 3 килограмм выльăх апачĕ, 10 тенкĕ укçа валеçсе пама май парать.

Çак задачăсене пурнăçлама колхозра агротехника мероприятийĕсене комплексла майпа пурнăçлама, уй-хирти, уйрăмах фермăсенчи йывăр ĕçсене чылай механизацилеме, ĕç ресурсĕсемпе туллин усă курма палăртнă.

Семинарта ялхуçалăх экономикин конкретлă ыйтăвĕсене, малта пыракан агротехникăпа зоотехникăна, механизаци ыйтăвĕсене вĕренесси пысăк вырăн йышăнмалла. Кунтах районти ялхуçалăхĕнче малта пыракансем — колхоз председателĕсем, уй-хир бригадирĕсем, дояркăсем те хăйсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа памалла.

Вĕренĕве йĕркелемен

Иртнĕ çулта пирĕн колхозра парти историне вĕренмелли кружок йĕркеленĕччĕ. Анчах кружок ĕçне колхозри парторганизаци тивĕçлипе тĕрĕслесе тăмарĕ, ĕçре пулăшса пымарĕ. Вĕренÿ çулĕ вĕçлениччен мĕн пурĕ те виçĕ занятиĕ кăна пулса иртрĕ.

Кăçал та парти вĕренĕвĕ япăх пулса пырать. Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа пĕр уйăх çурă ытла иртрĕ ĕнтĕ. Анчах пирĕн кружокра икĕ занятиĕ кăна пулчĕ-ха.

Парти историне вĕренмелли кружока ялти коммунистсем тата колхозри актив—пурĕ 44 çын çÿремелле. Апла пулин те пĕрремĕш занятире 13 çын, иккĕмĕш занятире 12 çын кăна пулчĕ.

Н. С. Хрущев юлташ докладне тăватă сехет хушши вĕренмелленчĕ, анчах И. Веселин пропагандист çав материала кружокри вĕренекенсене тĕплĕн ăнлантарса парас вырăнне хаçатран вуласа панипех иртерсе ячĕ. Паллах, занятие сăмăл иртрĕ: вĕренекенсем ыйтусем те памарĕç, тухса та калаçмарĕç. Çапла вара, иккĕмĕш занятиĕ сехет çурăрах вĕçленчĕ.

Парторганизаци секретарĕ А. Киселев юлташ парти вĕренĕвĕпе интересленмест. Вăл вĕренÿ çулĕ пуçланиччен коммунистсемпе тата ялти активпа калаçса пăхмасăрах вĕсене кружокра вĕренекенсен шутне кĕртнĕ. Хăшпĕр коммунистсем харпăр хăй тĕллĕн те вĕренмеççĕ, кружока та çÿремеççĕ. Кружокра вĕренекенсен хут-кăранташсем çук, çавăнпа та вĕсенчен пĕри те конспектсем çырса пымаççĕ.

И. НАУМОВ,
кружокра вĕренекен.

Елчĕк районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз.

Çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ

Анатри Кипеçа ял Совечĕн (Сĕрпÿ районĕ) яланхи ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ, колхоз агрономĕ Михайлова юлташ комисси членĕсене пухрĕ.

— Юлташсем,— терĕ вăл,— пирĕн Мичурин ячĕпе тăракан колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, лайăхрах вĕçлерĕ. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн комисси ĕçĕсем те палăрчĕç. Хăвăрах пĕлетĕр, малашне пирĕн умра тата пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа палăртса пачĕ. Умра тăракан пысăк задачăсене пурнăçлас ĕçре ял Совечĕ колхоз правленине халĕ нихçанхинчен ытларах пулăшма тивĕçлĕ. Эпĕ хамăр колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесшĕн. Чи малтанах çав ыйтусем çинче чарăнса тăмалла пулĕ: колхоз вăрлăх фондне мĕнле хывса çитернĕ, ялхуçалăх машинисене юсас ĕç мĕнле пырать, ĕç лашисене мĕнле пăхаççĕ, пусă çаврăнăшĕ мĕнле пурнăçланса пырать, колхозниксене агрономипе зоотехника наукисене вĕрентес ĕçе мĕнле организациленĕ.

Михайлова юлташăн сăмахне итленĕ хыççăн комисси ларăвĕнче колхозра асăннă ĕçсене тĕрĕслеме депутатсемпе активистсенчен уйрăм группăсем турĕç.

Тĕрĕслÿ ĕçне колхоз председателĕн заместителĕ Т. Алексеев, уй-хир бригадин бригадирĕ А. Петров, депутатсем тата активистсем хутшăнчĕç.

Комисси членĕсене колхоз кладовщикĕ Сергей Андреев ырă кăмăлпа кĕтсе илчĕ.

— Кăçалхи пек лайăх пахалăхлă вăрлăх колхоз халиччен хывса курман,— терĕ Андреев юлташ, сĕлĕ складне уçса.

— Ененетпĕр,— терĕ ял Совет председателĕ П. Скуратов юлташ,— анчах, ан манăр, КПСС Центральнăй Комитечĕ пире мĕнпур çĕр лаптăкĕ çине чи таса сортлă вăрлăхсем çеç акма кăтарту пачĕ. Халичченхи пек 2-мĕш сортлă вăрлăхсем акма пире никам та ирĕк парас çук.

— Вăрлăхсем аван, тетĕн,— терĕ Кольцов колхозник,— анчах шăтаслăхĕ мĕнле, миçе процента çитет? Вăрлăхсене типтерлĕ, пăсмасăр сыхласа усрассишĕн эсĕ ответлă-çке.

— Каçарăр,— терĕ кладовщик,— вăрлăхсен шăтаслăхĕ çинчен эпĕ пĕлместĕп, вăл правленинче паллă пулĕ.

— Апла пулсан, вăрлăхсем çуракине хатĕр мар темелле,— терĕ Иван Никитич.—Вăрлăхсен пахалăхне пĕлме районти вăрлăх лабораторине ăсатмалла. Пĕлме çук, пур йышши тырăсем енĕпе те вăрлăхсем çителĕклĕ тесе лăпланса ларсан, вĕсем чĕрĕ пулсан, хĕлле вĕсен шăтаслăхĕ сивĕпе чакать. Эсир колхоза вăрлăхсăр хăварма пултаратăр.

Сĕлĕ, хура тулă, пăрçа тата кантăр вăррине пăхса тухсан, ялхуçалăх комиссийĕн председателĕ Михайлова юлташ хăйĕн блокночĕ çине «Пăрçапа кантăр вăрри чĕрĕ тата вĕсене ампарта хулăм купаланă. Пăсăлма пултараççĕ. Васкавлă мерăсем йышăнмалла», тесе çырса хучĕ.

Складсен çумĕпе утнăçемĕн машина сасси хытăрах илтĕнме пуçларĕ.

Пĕр кĕлет умĕнче пилĕк колхозница хĕрсех тулă сортлаççĕ.

— Сывлăх пултăр, — терĕ уй-хир бригадин бригадирĕ Петров юлташ.— Тулă сортласа пĕтеретĕр-и?

— Сортлани çурри анчах пулать-ха,— терĕç хĕрсем иккĕн-виççĕн пĕр харăс, триерне чарса.— Пирĕн шутпа, çанталăк аван тăнă вăхăтра икĕ триерпа сортламалла, МТС-ран тепĕр триер илсе килмелле.

— Çакăн пек-и вара, санăн, Андреев юлташ, çуракине хатĕр вăрлăх?—терĕ Т. Алексеев депутат.— Тулла çурри кăна сортланă, эсĕ паянах хатĕр тесе сăмах çаптаратăн...

Ялхуçалăх комиссийĕ колхоз вăрлăх фондне висепе кăна культурăсем тăрăх хывса тултарнине, 807 центнертан 326 центнерне кăна сортланине, вăрлăхсем акма юрăхлипе юрăхсăррине никам та пĕлменнине палăртрĕ.

Уйрăм ĕçсене тĕрĕслеме уйрăлса кайнă группăсем пурте каялла колхоз правленине пуçтарăнчĕç. Ялхуçалăх комиссийĕ колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ хыççăн, çак ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухмалла, ĕçри çитменлĕхсене палăртмалла.

Уйăрса янă кашни группăна ертсе пыракансем ларура хăйсем ăçта мĕн курни, хăш ĕçре мĕнле çитменлĕхсем пурри çинчен каласа пачĕç.

— Ялхуçалăх машинисене пурне те сарайне пуçтарса лартман,— тет комисси членĕ Андреев юлташ.—Кантăр çапмалли молотилка итем çинчех ларать. Машинăсемпе плугсене юсама тытăнман. Хăшпĕр çынсен плугсене пурне те юсас мар шухăш та пур. «Пире пур-пĕрех тракторпа сухаласа параççĕ», теççĕ. Ун пек шухăшлани тĕрĕс мар. Плугсемпе трактор пырайман кĕтессене тата колхозниксен пахчисене сухаламалла. Тимĕрçĕсем патĕнче икĕ молотобоец çитмест, çавна пула вĕсем ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман. Лаша пăхас ĕçре те çитменлĕхсем пур. Г. Васильев юлташ каланă тăрăх, виççĕмĕш бригадăри конюхсем каçхине хуралта пулмаççĕ. Лашасене каçхине апат парсассăн, çĕрле унта пырса пăхмаççĕ.

— Кун пек пулсан, хамăр колхозăн ятне яратпăр,— калаçăва хутшăнчĕ Скуратов юлташ.—Пирĕн ĕçсене черетпе туса пырассине пĕтермелле. Комисси халĕ палăртнă çитменлĕхсене тахçанах пĕтерме май пулнă. Колхозра ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Вăрлăхсене пĕрремĕш класлă тăвиччен сортлама МТС-ран пысăк машина илсе килмеллеччĕ. Уй-хире тислĕк кăларма халиччен те тытăнман.

— Вунсакăр тонна минераллă удобрени илсе килнĕ,— терĕ Меркурьев колхозник.

— Ялхуçалăх науки вĕрентнĕ пек ĕçлекен колхозниксем вăйлă тырпул çитĕнтереççĕ. Çавăн пек тума пирĕн майсем çук-им вара? Пысăк майсем пур. Колхозниксене агрономи наукине лайăхрах вĕрентмелле, анчах пирĕн колхозра агрозоотехника курсĕсенче ноябрĕн 20-мĕшĕччен пĕр занятиĕ те пулман.

Кунта вара комисси председательне Михайлова юлташа—колхозри агронома хăйне хытă сăмах тиврĕ. Вăл колхозниксене ялхуçалăх науки çинчен вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выльăхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлес задачăна нумай çул ÿсекен курăксем акмалли пусă çаврăнăшне тĕрĕс пурнăçласа пымасăр татса пама çук. Колхозăн акмалли çĕрĕ 1.322 гектар шутланать, вăл шутран нумай çул ÿсекен курăксем 144 гектар çеç йышăнаççĕ, пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитерес тесен 300 гектар пулмалла.

— Ку ыйтăва ял Совечĕн çитес сессийĕнче сÿтсе явма лартма ыйтас,— терĕç комисси ларăвĕнчи депутатсем.

— Сирĕн шухăш-кăмăлăрпа пĕтĕмпех килĕшетĕп,— терĕ ял Совет исполкомĕн председателĕ Скуратов юлташ. Çак кирлĕ ыйтăва сессире сÿтсе явса, çитес çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшăпăр. Çуракине халех хатĕрленсе çитни пуриншĕн те лайăх пулать.

В. ИВАНШКОВ.

Тивĕçлипе ертсе пымасан

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Кĕрхи каçсенчен пĕринче Ленин ячĕпе тăракан колхоз клубĕнче «Колхоз высоких урожаев» кинофильм кăтартрĕç. Кăнтăрла хĕрÿ ĕçсенче пулнă пулин те, ял ĕçченĕсем кино курма йышлăн пухăнчĕç. Картина пурне те килĕшрĕ, пурте çак фильм çинчен калаçма тытăнчĕç. Хамăр республикăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пек ĕçлеме вĕренесси çинчен каласрĕç вĕсем.

Кунта ытти кинокартинăсене те хумханса пăхаççĕ. Кашни уйăхрах ялта 5—6 хут кинокартина кăтартаççĕ, сеанссенче 50—60 çын пулать. «Фильмсем пире пурăнма, ĕçлеме, кĕрешме вĕрентеççĕ»,—çапла калаççĕ колхозниксем.

Ялта кино кăтартасси лайăх пулса пыни, пуринчен малтан, колхозри пуçламăш парторганизаци çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пынинчен килет. Çĕнĕ кинофильмсем çинчен колхозниксене ăнлантарса парасси, курнă хыççăн çав фильмсем çинчен сÿтсе явасси, çĕнĕ картинăсем илсе килме заказ парасси парторганизацин ĕçри йăлине çирĕп кĕнĕ.

Район центрĕнчен икĕ километртра вырнаçнă «Волга» колхозра вара кино кăтартассине япăх йĕркеленĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă çак артель экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăр мар, колхозниксем пуян пурăнаççĕ. Пушă вăхăта культурăллă та усăллă иртерме колхозра пысăк клуб пур.

Кинопередвижкăсем кунта вăхăтра килмеççĕ теме çук, кашни эрнерех пулаççĕ. Анчах тĕрлĕ «сăлтавсем» чăрмантараççĕ. Сентябрь уйăхĕнче çынсем пухăнман тесе виçĕ хутчен передвижка каялла çаврăнса кайнă. Час-часах клуба хутса ăшăтманни те кансĕрлет. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем вара колхозри парторганизацие (секретарĕ М. Иванов юлташ) пачах та шухăшлаттармаççĕ. Кунта киноорганизаторсене те курма çук. Колхозниксене çĕнĕ картинăсем çинчен каласа памаççĕ, начар çырнă афиша кăларса çакаççĕ те, çакăнпа çырлахаççĕ.

Кино колхозниксемпе механизаторсене коммунистла воспитани парас, кадрсен идейăлла шайне хăпартас ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнине КПСС райкомĕ хăй те тивĕçлипе хаклать теме çук. Çакна райкомран вунă утăмра ларакан кинотеатр ĕçĕ кунсерен япăхса пыни те лайăх çирĕплетсе парать.

Чăн та, театрта киносеанссем пулаççĕ, анчах вĕсем питĕ начар иртеççĕ: час-часах лента татăлать, сас сÿхалать, çутă сÿнет...

Курмалли залра сивĕ, ăна вутă пур çинчех хутса ăшăтмаççĕ. Çавăнпа кинора 10—12 çынран ытла пулмасть, вĕсенчен те çурри ытла—ачасем.

Район центрĕнче партипе совет учрежденийĕсем, предприятисем, вăтам шкул, колхозпа МТС пур. Анчах вĕсенче ĕçлекенсем çеç мар, ертсе пыракан чылай работниксем хăйсем те кинотеатра сайра хутра кăна çÿреççĕ.

Кино кăтартас ĕç районта та питĕ япăх пулса пырать. Хăшпĕр ялсенче уйăхĕ-уйăхĕпе е çулталăкĕпех кино кăтартмаççĕ. 12 кинопередвижкăран çиччĕшĕ çеç юрăхлă. Вĕсем, чăн та, сеанс памалли плана тултараççĕ, анчах районĕпе вăтамран илсен, кашни сеанса 2—3 çын кăна пулать.

Шкул ачисене уйрăм сеанссем, колхозниксене ялхуçалăхĕ çинчен ÿкернĕ фильмсем кăтартас тесе никам та тăрăшмасть.

Хăшпĕр çĕрте кино кăтартас ĕçе лайăхлатма пулăшас вырăнне чăрмав кÿрекенсем те пур. Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Гурьев киномеханик Çирĕклĕ ялне «Волочаевские дни» фильм илсе пынă. Анчах сеанс пулман. Парторганизацинче çак факт çинчен сÿтсе явман.

Районти культура пайĕ те хăй ĕçĕнчен хăй пăрăнса тăрать. Çакна пулах ĕнтĕ ялсенче график тăрăх кино кăтартас ĕç пурнăçланса пымасть.

Райисполкома манăçа юлнă пĕр ĕç çинчен аса илтермелле. Çулталăк пуçламăшĕнче ял Совечĕсене кино кăтартса укçа пухма план панă. Çав плана пĕр ял Совечĕнче те пурнăçласа пымаççĕ. Райисполком çав план мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслеме халиччен те тытăнман-ха.

Н. ОРЛОВ.

Юлашки почтăран

„Фельетон вырăнне"...

Муркаш районĕнчи «Колхозник сасси» хаçат çак çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче «Паян кино пулмасть» ятлă корреспонденци пичетленĕ. Корреспонденци ячĕ умĕн «Фельетон вырăнне», тесе çырнă. Калас пулать, ку заметкăна фельетон теме нимпе те май çук.

Хаçатра пичетленекен чăн-чăн фельетон тăрне «Фельетон вырăнне» мар, «Фельетон» тесе çыраççĕ. Тата çакна палăртни кирлĕ: асăннă заметкăн заголовокне кавычкăна илмелле пулнă. Хаçат хăйĕн вулаканĕсене паян кино пулмасть тесе пĕлтерниччен тĕлĕнмелле кăна.

КĔСКЕН

ИШЛЕЙ. «Красный плуг» колхоз çак кунсенче 22 лаша вăйлă двигатель илсе килчĕ. Колхоз двигатель вăйĕпе арман авăртма, авăн çапма палăртать

Н. МОЧАЛОВ.

СĔРПÿ. Ялхуçалăх техникумĕ çумĕнче çак кунсенче вуламалли зал уçрĕç. Унта студентсене вăхăта культурăлла иртерме пур условисем те çителĕклĕ. Кунта вулакансен конференцийĕсем, шашкăпа шахмат ăмăртăвĕсем пулса иртеççĕ.

Г. КРАСНОВ.

Пропагандистсен кадрĕсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла

Марксизм-ленинизма тата парти политикине вĕренни пĕтĕм совет çыннисене парти решенийĕсене активлăн пурнăçлама, парти ĕçĕ çĕнтерессине шанса тăма, коммунизм строительствинче çитĕнÿсем тума пулăшать. Çакăнтан тухса тăрать те ĕнтĕ парти вĕренĕвне пур çынсене те идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра туса пырас задачă. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçласси вара, тĕпрен илсен, пропагандистсен кадрĕсенчен килет.

«Занятисем мĕнле иртерессине,—кăтартса панă В. И. Ленин,—нимĕнле контроль та, нимĕнле программăсем те т. ыт. те пачах улăштарма пултараймаççĕ, занятисем мĕнле иртесси лекторсен составĕнчен килет» (Соч., 5 т., 435—436 стр.).

Пропагандист — парти вĕренĕвĕнче тĕп фигура. Пропагандист пуласси—чыслă та ответлă ĕç.

Парти организацийĕсем политшкулсемпе кружоксен руководителĕсене, лекторсемпе консультантсене суйласа лартас ĕç çине тимлĕн пăхнине пула юлашки çулсенче республикăра пропагандистсен составĕ чылаях лайăхланчĕ, теорие вĕрентес ĕçре пропагандистсен пултаруллă кадрĕсем ÿссе çитĕнчĕç. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче политшкулсемпе кружоксене ертсе пыма çирĕплетнĕ коммунистсенчен çурри ытла аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă е аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Консультантсемпе семинар руководителĕсенчен нумайăшĕ аслă шкул пĕтернĕ. Пропагандистсен чылайăшĕ 3—5 çул тата ытларах та ĕçлеççĕ, вĕсем ĕçре пысăк опыт пухрĕç.

Марксизм-ленинизм теорине пропагандăлас ĕçе туса пыракан парти активĕн тата ертсе пыракан парти работникĕсен йышĕ пысăк. Çакă вăл политикăлла вĕренĕвĕн шайне хăпартма хушать. Çакна шута илсе, кăçалхи вĕренÿ çулĕнче КПСС Ишлей, Калинино тата ытти хăшпĕр райкомсен секретарĕсем, пайсен заведующийĕсем, инструкторĕсем пропаганда ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

Марксизм-ленинизм теорине вĕрентессине витĕмлĕ туса пырас ĕçре пропагандистсен кадрĕсене пĕлсе суйласа илни пысăк вырăн йышăнать. Анчах çакна хăшпĕр районсенче çителĕксĕр шута илеççĕ-ха. Иртнĕ çулта, сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче, Улатăр хулинче марксизм-ленинизм теорине пропагандăлас ĕçе тума çителĕксĕр хатĕрленнĕ, авторитет çухатнă çынсене уйăрса лартни пулнă.

Пропагандистсем хăйсем марксизм-ленинизм теорине яланах лайăх пĕлме тивĕçлĕ, вĕсен методикăлла пултарулăха ÿстерсе пыма тăрăшмалла. Политшкул, кружок тата семинар руководителĕсене, лекторсемпе консультантсене, вĕсем опытлă тата нумай вĕреннĕ пулсан та, пулăшу кирлĕ.

Коммунистсен партийĕ пропагандистсен кадрĕсене воспитани парассине тимлĕн туса пырать. Çакна КПСС обкомĕ çумĕнче иртерекен тĕрлĕ курсĕсемпе семинарсенчен те аван курма пулать. Кăçал çуллахи вăхăтра кăна парти обкомĕ çумĕнчи пĕр уйăхлăх курсран 360 пропагандист вĕренсе тухнă.

Пропагандистсен пĕлĕвне ÿстерес ĕçре партин хула тата районти комитечĕсем çумĕнче организациленĕ яланхи семинарсем паллă вырăн йышăнаççĕ. Политшкулпа кружок руководителĕсем, консультантсем çак семинарсенче теорилле тата методикăлла пулăшу илеççĕ.

Республикăра КПСС хула тата район комитечĕсем чылайăшĕ пропагандистсен семинарĕсене йĕркеллĕ иртереççĕ. Партин Шупашкар хула комитечĕ çумĕнчи пропагандистсен яланхи семинарĕнче иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вĕренÿ планĕнчи кашни тема тăрăх икшер занятиĕ иртернĕ. Малтанхи занятире пропагандистсем кружоксенче вĕренмелли тема тăрăх теорилле лекци итленĕ. Кунта вĕсене методикăлла кăтартусем панă, занятисен примерлă планне тума пулăшнă, мĕнле кĕнекесем вуламаллине кăтартнă. Çакăн хыççăн пропагандистсем материала харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ, семинарта пулакан теорилле калаçăва хатĕрленнĕ. Иккĕмĕш занятире вара малтан палăртнă тĕп ыйтусем тăрăх теорилле калаçусем иртернĕ, ăнланман ыйтусене сÿтсе явнă. Семинарсенче рефератсемпе докладсем иртерни те кружок руководителĕсене занятисен пахалăхне лайăхлатма нумай пулăшнă.

Улатăр районĕнче пропагандистсен семинарĕсене методика енчен тĕрĕс мар иртереççĕ: пĕр-пĕр тема тăрăх лекцие тата семинарти занятие умлă-хыçлă пĕр кунтах иртереççĕ. Çавăн пек тунă пирки пропагандистсем тĕп ыйтусене асăрхамасăр хăварма пултараççĕ.

Чылай çĕрте тата пропагандистсен семинарĕсенче теорилле тата методикăлла ыйтусем тăрăх юлташла калаçусем иртерессине, рефератсем вуласине йĕркелемен. Семинарсенче теорилле лекцисем иртерейнипех лăпланаççĕ. Çак пысăк çитменлĕхе пĕтермелле. Пропагандистсен семинарĕсенче ытларах теорилле калаçу иртерни, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашассине йĕркелени, партипе совет работникĕсен, промышленноçри тата ялхуçалăхĕнчи специалистсен лекцийĕсемпе докладĕсене иртерни кирлĕ.

Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви йышăннă решенисене вĕренесси пропагандистсен семинарĕн ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла. Лекцисемпе занятисен шайне ÿстерес пулать, вĕсене Коммунистсен партийĕ хальхи вăхăтра татса паракан пысăк задачăсемпе таччăн çыхăнтарас пулать. Партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарас, халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă решенисене пропагандистсене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Вĕсем вара вĕренекенсене çав решенисенчен тухса тăракан задачăсене вырăнти фактсемпе çыхăнтарса ăнлантарса пама тивĕç.

Марксизм-ленинизм теорине начетчикла вĕреннине хирĕç кĕрешес ĕçре пропагандистсен семинарĕсем пысăк вырăн йышăнмалла. Семинар руководителĕсен теори тĕлĕшĕнчен хăйсен тĕплĕн хатĕрленмелле, вĕсен кружоксен занятийĕсенче час-часах пулса пропагандистсен ĕçĕпе паллашмалла.

Парти организацийĕсен Коммунистсен партийĕн теорийĕпе историне харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе лайăхлатма консультантсен тата семинарсен руководителĕсен теорилле пĕлĕвĕпе методикăлла пултарулăхне ÿстерес пирки те çине тăрса ĕçлемелле.

Пропаганда ĕçĕнчи паха опыта пĕтĕçтерсе ăна сарни, çитменлĕхсене вăхăтра палăртса пĕтерни пысăк вырăн йышăнать. Çакна тума политшкулсемпе кружоксен руководителĕсемпе, лекторсемпе, консультантсемпе уйрăм канашлусем иртерни, пĕр-пĕрин занятине çÿрени нумай пулăшать. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче партин Шупашкар хула комитечĕн библиотеки тата пропагандистсен унти семинарĕсен руководителĕсем çапла туса пынă: кружоксемпе политшкулсенче черетлĕ занятиĕ иртермелли вăхăт çитиччен темиçе кун малтан пропагандистсене уйрăммăн чĕнсе вĕсем занятие мĕнле хатĕрленнипе тĕплĕн паллашнă. Çакă, пĕр енчен, пропагандист ĕçне тĕрĕслеме, тепĕр енчен, ăна вăхăтра пулăшма май парать. Ку формăна кăçал та анлăн усă курмалла. Парти комитечĕн, уйрăмах пропагандăпа агитаци пайĕн работникĕсем занятисенче пулса, вĕсене тĕрĕс анализ туни пропагандистсемшĕн питĕ усăллă, çапла туни çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать.

Пропагандистсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, занятисен, лекцисен, консультацисен содержанине тарăн тишкерес пулать. Контроль тумалли майсенчен пĕри партин хула е район комитечĕн бюровĕнче, коммунистсен пухăвĕнче итлесе сÿтсе явасси пулать. Кăна тăвас умĕн пропагандистăн, кружокăн ĕçне тĕплĕн, пур енчен те тĕрĕслени кирлĕ. Çакă вăл пропагандистăн ответлăхне ÿстерет, занятисен идейăлла шайне хăпартма пулăшать.

Политикăлла вĕренÿре чи кирли—занятисен пахалăхĕ. Пуçламăш парторганизацисен коммунистсемпе кадрсен марксистла-ленинла вĕренĕвне çÿлти пусăмра туса пырассишĕн тăрăшса ĕçлемелле. Парти организацийĕсем куллен тĕрĕслесе тăнă çĕрте кăна парти вĕренĕвĕн пахалăхĕ лайăх пулать.

Пропагандист ĕçне тивĕçлипе туса пыма нумай пĕлни кирлĕ. Принциплă, чăтăмлă тата пултаруллă пропагандист пулас тесен, нумай вĕренес пулать тата чылай опыт пухас пулать. Çакна парти организацийĕсен яланах асра тытса пурнăçласа пымалла. Пропагандистсене тĕрлĕрен урăх обществăлла ĕçсем нумай хушни тĕрĕс мар. Пропагандист ĕçĕ — партин тĕп порученийĕ.

Пропагандистсен теорилле тата методикăлла пĕлĕвне ÿстерни, вĕсене куллен пулăшса пыни парти вĕренĕвĕн идейăпа теорилле шайне çĕнĕ пусăма хăпартмалли чи кирлĕ услови пулса тăрать.

В. ВАСИЛЬЕВ,
КПСС Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пропаганда секторĕн заведующийĕ.

Шупашкарти пир-авăр комбинатне хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа тăвар!

„Легпромстройăн“ 11-мĕш трестĕнчи хуçалăх активĕн пухăвĕнчен

Çак кунсенче Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвакан «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн хуçалăх активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура строительсемпе монтажниксемсĕр пуçне пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, республикăри тата хулари парти, совет, профсоюз организацийĕсен представителĕсем, çавăн пекех СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министрĕн заместителĕ Акимов юлташ, Главхлоппром начальникĕ Хренов юлташ пулчĕç.

Трестăн 1953 çулхи 10 уйăхри ĕç итогĕсем çинчен тата çулталăкри программăна пурнăçлас тĕлĕшпе строительсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн управляющийĕ Румянцев юлташ доклад туса пачĕ.

* * *

— Трест коллективĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех,—тет Румянцев юлташ,—пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлет. Комбината туса лартма тытăннăранпа çип арлакан 84 пин йĕке, пир тĕртекен 432 станок вырнаçтарса лартнă. Çĕнĕ поселок ÿссе ларчĕ. Унта 12.000 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем, çĕнĕ магазинсем, вăтам шкул, техникум т. ыт. те пур. Çăкăр завочĕпе ачасен иккĕмĕш садне туса пĕтерессĕ.

Уйрăмах техникăна алла илнĕ, пуçаруллă кадрсем ÿссе çитĕннине палăртас пулать. Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн 12 бригадăна «Пиллĕк лайăх тата пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен бригада» ятне панă. Çав хисеплĕ ята Смирнов, Полубарьев, Киричников, Урочаев, Андрюшкин, Толчин, Карманеев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем т. ыт. те илме тивĕçлĕ пулчĕç. Ласточкин, Автономов электросварщиксем, Урочаев мостовщик, Васильев платник ĕç нормине икĕ хут е ытларах та ирттерсе тултараççĕ.

Анчах трест строительствăпа монтаж планне тултарса пыраймасть, уйрăм фабрикăсемпе çуртсене вăхăтра туса çитереймест. Вăл кăçалхи 10 уйăхри плана 87,2 процент çеç тултарнă, планпа палăртнинчен çип арлакан 13.301 йĕке, пир тĕртекен 500 станок сахалтарах вырнаçтарса ĕçе янă. План тăрăх 3.600 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем туса пĕтермелле пулнă. Чăннипе пĕр çурта та туса пĕтермен. 110 ача вырнаçмалли яслине иккĕмĕш кварталтах туса пĕтерме палăртнă. Вăл халĕ çеç хатĕр.

Докладчик «Правда» хаçат «Шупашкарти пир-авăр комбинатне мĕншĕн вăраххăн тăваççĕ?» ятлă статьяра трест ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕрĕс тата вăхăтра уçса панине палăртать.

Стройкăра механизмсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Ĕçе тĕрĕс йĕркелемен, хăшпĕр операцисене механизацилемен пирки экскаваторсем, автопогрузчиксем тата ытти машинăсемпе механизмсем час-часах ахаль лараççĕ. Çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх башеннăй крансене 4.816 сехет ĕçлеттермелле пулнă: Чăннипе 2.272 сехет çеç ĕçлеттернĕ. Маляр ĕçĕсене 44,9 процент, штукатур ĕçĕсене 36 процент çеç механизациленĕ. Стройкăра носилкăсемпе усă курассине халиччен те пĕтермен. Хăшпĕр участоксенче ĕç дисциплини çирĕп мар. Уйрăм участоксемпе пайсен руководителĕсем плана тултарассишĕн, техникăпа туллин усă курассишĕн ответлăха туймаççĕ. Суя сведенисем панă, государствăна улталас çул çине тăнă тĕслĕхсем те пулнă. Автомашинăсене паха юсамаççĕ тата тĕрĕс ĕçлеттермеççĕ.

Трест управленийĕпе постройком малта пыракан бригадăсемпе новаторсен опытне пĕтĕçтерсе сармаççĕ. Социализмла ăмăртăва пĕтĕм коллектив хутшăннă. Анчах ăмăрту итогĕсене çиелтен çеç пăхса тухаççĕ. Постройком (председателĕ Краснов юлташ) коллективăн творчествăлла активлăхне ÿстерсе пыма тăрăшмасть. Партбюро социализмла ăмăрту мĕнле пынипе сахал интересленет.

Механизмсемпе япăх усă курнă, ĕçе тĕрĕс организацилемен, социализмла ăмăртăва кирлĕ пек йĕркелемен пирки трест ĕç тухăçлăхне ÿстермелли 10 уйăхри плана 85,9 процент çеç тултарнă. 402 рабочи ĕç нормине тултарса пыраймасть. Ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулнипе трест 4,4 миллион тенкĕлĕх строительствăпа монтаж ĕçĕсем сахалтарах тунă.

Уйрăмах государство укçи-тенкипе пурлăхне типтерлĕн тыткаламаннине палăртас пулать. Шыв тăрăх кÿрсе килнĕ материалсене баржăсенчен вăхăтра пушатманшăн 200 пин тенкĕ ытла штраф тÿленĕ. Хăшпĕр мастерсемпе прорабсем туман ĕçшĕн ĕç укçи тÿленĕ тĕслĕхсем сахал мар пулнă. Материалсем вăхăтра кÿрсе килмен, нарядсем çийĕнчех çырса паман пирки рабочисем час-часах ахаль тăраççĕ. Çаксем вĕсем ĕç укçи-ытлашши расхолласси патне илсе пыраççĕ.

Трест управленийĕ хуçалăх расчетне çирĕплетме, материалсене типтерсĕр расходланине пĕтерме тăтăклă мерăсем йышăнман. Стройкăра хуçасăрлăх нумайăшне кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар. 15 пин кубометр хăйăра, 104 тонна асфальта Атăл шывĕ илнĕ. 200 тонна цемента йĕпетнĕ. Автомашинăсем çине тиесе пушатнă чухне кашни вунă кирпĕчрен тăваттăшне ванать. Хăшпĕр ертсе пыракан работниксем материалсене типтерсĕр пĕтернине суя отчетсемпе витме пăхаççĕ. Прораб пулнă Сомкин 38 кубометр хăмана суя çине сарнă, тесе тĕрĕс мар сведени панă. Пичушкинпа Орлов мастерсем те çавăн пек киревсĕр хăтланас çул çине тăнă.

План тăрăх строительствăпа монтаж ĕçĕсен хакне 2,7 процент йÿнетмелле пулнă. Чăннипе çав ĕçсен хакĕ 9,8 процент ÿснĕ, трест икĕ миллион тенке яхăн убыток тунă.

Трестăн главнăй инженерĕ Чепурин юлташ çĕнĕ техникăна юратмасть, йывăр ĕçсене механизацилессишĕн кĕрешмест, растворпа бетон хатĕрленĕ тата хывнă чухне техникăлла условисене пăснине килĕшсе тăрать. Вăл участок начальникĕсен, прорабсен ответлăхне ÿстерме мерăсем йышăнмасть, çамрăк специалистсене вĕрентмест, çĕнĕ кадрсем хатĕрлеме, рабочисен квалификацине ÿстерме тăрăшмасть.

Производствăпа техника пайĕн начальникĕ Поляков юлташ Ломагин, Дорохова, Белых инженерсене заданисем памасть, вĕсене тĕрĕс ĕçлеттермест. Чепуринпа Поляков юлташсем ертсе пыманнипе производствăпа техника пайĕ техникăлла пуçарусемпе шухăшсен штабĕ пулса тăмасть.

Снабжени пайĕпе транспорт пайĕн начальникĕсем Чирковпа Шулов юлташсем хĕлле ĕçлеме кирпĕч, чул, хăйăр, йывăç, цемент запасĕсем тума тăрăшман. Материалсем çитменнипе нумай рабочисем тухăçлă ĕçлеймеççĕ, трест эрнери тата кулленхи графиксене пурнăçласа пыраймасть.

Строительсем валли пурăнма тата культурăлла канма паха майсем туса паман. Чылай рабочисем уйрăм çынсен патĕнче хваттерте пурăнаççĕ. Мунча, клуб, стадион çук.

Комбинат тунă çĕрте, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕсĕр пуçне, Сантехлегпром, Энерголегпром, Союзлегпроммонтаж участокĕсем ĕçлеççĕ. Асăннă участоксен начальникĕсем Батанов, Александренко, Гроссберг, Монахов юлташсем строительствăпа монтаж планне тултарса пырассишĕн кĕрешмеççĕ. Сантехлегпром участокĕ пир тĕртекен фабрикăн иккĕмĕш секцине ăшăтмалли хатĕрсене туса çитерейменнипе станоксене вырнаçтарса лартма май çук.

Союзлегпроммонтаж участокĕ çип арлакан тата пир тĕртекен оборудование вырнаçтарса лартас тĕлĕшпе япăх ĕçлет.

Сичĕ уйăх хушшинче те пăс хуранне вырнаçтарса çитереймен. Кантур юлса пынине çакăнтан та курма пулать: вăл 10 уйăхри плана 50,5 процент çеç тултарнă.

Строительствăпа монтаж ĕçĕсен пахалăхĕ çителĕксĕр. Проекта тата техникăлла условисене пурнăçламаннипе хăшпĕр ĕçсене пăсса тунă тĕслĕхсем сахал мар пулаççĕ. Гипролегпром проектсемпе сметăсене вăхăтра туса хатĕрлеменни строительсене сахал мар чăрмантарать. Техникăлла документсем пулманнипе хăшпĕр çуртсене тума тытăнайман.

Пир-авăр комбиначĕн дирекцийĕ çаврăнăçусăр пулнипе хăшпĕр ĕçсене туса çитерме май çук.

1953 çул вĕçленесси нумай юлмарĕ. Çулталăкри плана ăнăçлă тултарас тесен, строительсен халиччен-хинчен икĕ-виçĕ хут вăйлăрах ĕçлемелле, асăннă çитменлĕхсене пĕтермелле. Кăçалхи плана тултарассишĕн кĕрешнĕ вăхăтрах пирĕн çитес çулта тухăçлă ĕçлеме хатĕрленес пулать. СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерстви кăтартса панă тăрăх, çак кварталта 2.000 кубометр чул, 3.000 кубометр грави тата вак чул, чылай хăйăр, бетонпа столяр изделийĕсем хатĕрлемелле, чылай хушма предприятисем организацилемелле. Пысăклатнă плана тултарма ăста кадрсем ытларах кирлĕ пулаççĕ. Çавăнпа пирĕн кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тата воспитани парас ĕçе вăйлатмалла, механизмсемпе туллин усă курма, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыма тăрăшмалла.

Румянцев юлташ докладĕ тăрăх 17 çын тухса каларĕ.

Чи малтан промышленность участокĕн начальникĕ Мигушин юлташ сăмах илет. Вăл трест участока çителĕксĕр пулăшнине кăтартакан тĕслĕхсем çинче чарăнса тăрать.

— Эпир эрнери, талăкри графиксем тăтăшах тăватпăр,—тет оратор,—анчах вĕсене пурнăçламастпăр. Мĕншĕн-ха? Материалсем çителĕклĕ парса тăманнипе. Пĕр уйăх хушши хăма кĕрпипе шлак тата тивĕçлĕ маркăллă битум çук. Цемент çуккипе нумай бетонщиксем ĕççĕр тăраççĕ. Çавăн пек çитменлĕхсемпе епле килĕшсе тăма пулать-ха?

Мигушин юлташ машинно-прокатнăй база асфальт вĕретмелли хурана вăхăтра юсаса паманнине палăртать.

— Механизмсемпе япăх усă курнăшăн «Правда» хаçат пире тĕрĕс критиклерĕ. Трест руководителĕсен машинăсене лайăхрах пăхса усрама тата паха юсама тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Çавăнпа пĕрлех сĕр чавса купалас ĕçе механизацилемелле, унсăрăн графиксене пурнăçласа пыма хĕн.

Мигушин юлташ стройкăра çамрăк специалистсемпе ĕçлессине лайăхлатма, техникăна вĕренес ĕçри çитменлĕхе пĕтерме кирлине палăртать, «Мастер кунне» ирттерме сĕнет.

Промышленность участокĕнчи чи лайăх бригадирсенчен пĕри Васильева юлташ пысăк çитменлĕхсене палăртать.

— Вăхăт иртет,—тет вăл,—анчах материалсем çитменнипе пир тĕртекен фабрика çуртне туса пĕтерейместпĕр. Материалсем çеç парăр, пирĕншĕн ĕç чарăнса тăмĕ!

Пурăнмалли çуртсем, культура тата йăла учрежденийĕсем тăвакан участокра та материалсем çитмеççĕ. Çав участок начальникĕ Никитин юлташ «Правда» хаçат ăна тĕрĕс критикленине йышăнса, трест руководителĕсене материалсем парса тăрас ĕçе тататклăн лайăхлатма, участоксене техникăлла документсем вăхăтра пама сĕнет. Вăл трест руководителĕсене çакăншăн критиклет: вĕсем хушнипе туса çитереймен çуртсене пурăнма яраççĕ, çавăн пирки çуртсене пĕтĕмĕшпе туса пĕтерме кансĕр.

Сăмах пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен работница Слепцова юлташ илет.

— Юлташсем!—тет вăл. — Эпĕ пирĕн рабочисен йăла ыйтăвĕ çинче чарăнса тăрасшăн. Темиçе çул каярах комбината тума килнĕ чухне унта пушă вырăн çеç-чĕ. Халĕ çÿлĕ корпуссем, пурăнмалли çуртсем лараççĕ. Çавăнтан эпир партипе правительство рабочисемшĕн мĕн тери тăрăшнине лайăх куратпăр. Анчах строительсем çав паха майсемпе туллин усă кураççĕ-и? Çук. Уйрăм руководительсем ĕç çине тимсĕр пăхаççĕ, партипе правительство кăтартăвĕсене манаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн поселокри хăшпĕр çуртсенче канализаципе водопровод çук. Хĕл çитрĕ, анчах 8-мĕш çуртăн тĕпсакайĕ усă. Сантехлегпром участокĕн монтажникĕсем ăна юсама васкамаççĕ. Тĕпсакайне халех тирпейлесе хумасан рабочисен çĕрулми шăнма пултарать. Ыйтас килет: çавăн пек хăтланма асăннă участок начальникне Александренко юлташа кам ирĕк панă-ха? Комбината тăвас ĕç темиçе çул пырать, халĕ строительсемпе текстильщиксен хисепĕ темиçе пин, анчах клуб халиччен те туса лартман. Тĕрĕс-и вăл? Паллах, тĕрĕс мар. Рабочисен йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн, культурине ÿстерессишĕн пирĕн тăван парти, пирĕн тăван правительство хушнă пек тăрăшмалла. Çавăн пек ĕçлеме хушас килет пирĕн трестпа комбинат руководителĕсене.

Монтажниксен бригадирĕ Круглов юлташ çапла калать:

— Пир тĕртекен фабрикăра лартакан оборудование пĕтĕмпех çĕршыври заводсенче туса хатĕрленĕ. Вăл çав тери чаплă оборудовани! Анчах пирĕв ăна мĕнле упраççĕ-ха? Станоксене лартакан пÿлĕмри чÿречесем усă, çил вĕрет. Ирхине ĕçе пыратăн та станоксем çинче юр выртнине куратăн. Тĕнчери чи лайăх оборудование пăсни çав тери хумхантарать.

Круглов юлташ каланă тăрăх, строительсен тата Сантехлегпром участокĕнчи рабочисен оборудовани вырнаçтарса лартма лайăх условисем туса пама тăрăшмалла. Вăлах Сантехлегпром участокĕнче ĕçе тĕрĕс йĕркелеменнине, унта сдельщинăна пурнăçламаннине, çав çитменлĕх плана тултарма чăрмантарнине палăртать.

— Пирĕн нумай станоксем вырнаçтарса лартса ĕçе ямалла,—тет Круглов юлташ.—Ăста монтажниксен ячĕпе умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçлама сăмах паратăп. Анчах пире чăрмантарни ан пултăр, ĕçе анлă сарма май пултăр. Совет çыннисем пирĕн комбинатран илемлĕ те паха пир-авăр кĕтеççĕ. Эпир вĕсен ыйтăвне тивĕçтермелле. Партипе правительство халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерес, вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă постановленисем строительсен политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне тата ытларах вăйлатрĕç. Пир-авăр комбинатне тăвас ĕçе хăвăртлатассишĕн социализмла ăмăртăва анлă сарар!

Осипов монтажник стройкăна электричество энергийĕ татти-сыпписĕр парса тăманнине, ун пирки монтаж ĕçĕсем йĕркеллĕ пулса пыманнине, ăста рабочисем ахаль тăнине палăртрĕ.

Монтаж участокĕнчи **Павленко** мастер трест руководителĕсем монтажниксен ыйтăвĕсене çителĕксĕр тивĕçтернине, тĕрлĕ руководительсем, участоксем пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлеменнине палăртать.

— Телефонпа транспорт пайĕнчен ыйтсан: сирĕн пата машина тухса кайрĕ, кĕтĕр, тесе ответлеççĕ. Кĕтен, кĕтен, машина çав-çавах çук. Çул çине тухса тĕл пулакан машинăна тытма тивет, унсăрăн ăна тепĕр участока илсе каяççĕ. Çавăн евĕрлĕ çитменлĕхсене пĕтермелле.

Абрамов юлташ стройкăра пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Вăл трест руководителĕсене строительство ĕçĕсене хăвăртлатма, оборудовани вырнаçтарса лартма çуртсене вăхăтра туса пĕтерме мерăсем йышăнма сĕнет. Вăл каланă тăрăх, трест руководителĕсем приказсем сахал мар çыраççĕ, анчах вĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемеççĕ. Вĕсем строительство ĕçĕсене япăх тунипе те килĕшсе пурăнаççĕ.

— Пирĕн строительствăра,—тет Абрамов юлташ,—нумай работниксем хăйсем панă сăмаха тÿрре кăлармаççĕ, çавăнпа паха обязательствăсемех пурнăçа кĕмесĕр юлаççĕ.

— Бетонпа раствор хатĕрлекен предприяти,—терĕ хушма предприятисен пайĕн мастерĕ Акимов юлташ,—участоксен ыйтăвне кирлĕ пек тивĕçтереймест. Апла пулин те, çак предприятие çĕнетсе лайăхлатмаççĕ. Вăл нумай кирлĕ ĕçсене унта механизацилемеççĕ. Суршар тонна туртакан плитасене ал вăйĕпе çĕклеме тивет Трест, главк тата министерство мĕншĕн-ха çав фактсемпе килĕшсе пурăнаççĕ? Строительствăри ĕçсене механизацилемелли майсемпе те усă курмаççĕ. Унта хăмасене хулпуççи çинче йăтма тивет. Столяр мастерскойне лайăх техника панă пулин те, вăл ĕçлемест. Ку вăл йывăç материалсем кÿрсе килменнипе пулнă.

Профсоюз организацийĕ ăмăртăва сарассишĕн сахал тăрăшать. Пирĕн стройкăра хисеплĕ грамотăсем памалла туни çинчен пĕлтереççĕ, анчах вĕсене никама та памаççĕ. Постройкомра çакна грамота бланкисем çуккипе ăнлантарма пăхаççĕ. Çакăн пек «ăнлантарнине» паллах, ĕненме çук.

Токарь Гордон юлташ машинăпа прокат базине вăйлатма кирли çинчен каларĕ. Строительство ĕçĕсене механизацилесси ÿсет пулин те, базăра кирлĕ инструментсем çук, унăн çуртне хĕле хатĕрлесе çитермен.

— «Правда» хаçат,—терĕ гараж начальникĕ Аргандеев юлташ, — пирĕн стройкăри çитменлĕхсене ахальтен мар критиклерĕ. Эпĕ хамăра тÿрре кăларасшăн мар: эпир чăн та япăх ĕçлетпĕр, хамăр пултарнине тумастпăр. Çапах та пирĕн мĕнле условисенче ĕçлеме тивни çинчен те каламасăр хăварма юрамасть. Автомашинăсене çурри ытла пĕр тăхтаса тăмасăр юсамалла. Пирĕн автогараж мĕнле-ха? Вăл карта тытса çавăрнă пуш вырăн кăна. Мастерскойсем, ăшă çуртсем, токарнăй станоксем çук.

Аргандеев юлташ трест руководителĕсене строительство площадкинче лайăх çулсем тума тăрăшманшăн тĕрĕссипе критиклет. Ахальтен мар ĕнтĕ кĕркуннепе хĕлле стройкăра автомашинăсене тракторсенчен кăкарса илсе çÿреме тивет. Çавна пула, хăмăр çĕршывра туса кăларнă автомашинăсем, пахалăхĕ енчев ют çĕршыврисенчен чылай малта тăраканскерсем, вăхăтченех стройран тухаççĕ.

— Çĕнĕ управляющи,—тет Аргандеев юлташ,—юлашкив вăхăтра çулсемшĕн ытларах тăрăшса, тĕрĕс тăвать. Вăл çулсене йĕркеллĕ тытса тăма сăмах пачĕ. Çакă сăмахпа кăна пулса ан юлтăрччĕ.

Автоработниксем хушшинче, тет юлашкинчен Аргандеев юлташ, лайăх специалистсем сахал мар, коллектив хăй умне лартнă задачăсене пурнăçлама пултарать.

Пир-авăр комбиначĕн директорĕ Бекренев юлташ 1953 çулта треста техникăлла документаци иртнĕ çулхинчен лайăхрах парса тăнине палăртрĕ. Çакă вăл строительсен ĕçне лайăхлатма май пачĕ. Çапах та документацие вăхăтра парса тăрас ĕçре халĕ те чăрмавсем пулаççĕ. Çавăнпа та пухура заказчика критикленине тĕрĕс тесе йышăнас пулать.

Бекренев юлташ строительсен коллективĕ Майăн 1-мĕшĕ умĕн социализмла пысăк обязательствăсем йышăнни çинчен аса илтерчĕ. Çав обязательствăсенче объектсене ĕçе кĕртмелли срокҫене палăртса хунă пулнă. Çапах та çав срокҫене пăхăнайман. Пĕрремĕш насус станцине çуллах туса пĕтерме май пулнă, анчах çавна туман, халĕ вара, хĕл вăхăтĕнче, ĕçлеме йывăртарах. Сулла çулсем те кирлĕ пек тăвайман.

Монтаж участокĕсем çине трест çителĕксĕр пăхнă, вĕсене ĕç çителĕклĕ чухлĕ тупса пама тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Строительство ĕçĕсене туса çитерменни оборудовани вырнаçтарса лартма чăрмантарать.

— Сантехлегпром участокĕ питĕ япăх ĕçлет,—тет Бекренев юлташ.—Апла пулин те, участок руководителĕсем çакăншăн пăшăрханмасçĕ. Унтан та ытларах, участокра «часах ниmĕнле ĕç те пулмасть», тесе шутлаççĕ. Çак участок çине тимлĕрех пăхас пулать, унăн начальникне Александренко юлташа ĕç çине тÿрĕ кăмăлпа пăхма хушмалла.

Çип арлакансемпе пир-авăр тĕртекенсем, тет Бекренев юлташ, строительсем умне пысăк ыйтусем лартаççĕ, пир тĕртмелли корпусра станоксем вырнаçтарса лартмалли никĕссене хăвăртрах туса çитерме, вентиляци тума, ăшă пама тата урай сарма ыйтаççĕ. Вăтам шкула, çăкăр заводне, ача садне тахçанах туса пĕтерсе, вĕсене государство комиссине памалла пулнă. Пурăнмалли çуртсем хăвăртрах тумалла.

— Строительство пахалăхне тĕпрен лайăхлатас пулать,—тет Бекренев юлташ.—Çип арлакан корпусра хăшпĕр колоннăсем чалăшса кайнине пурте пĕлетпĕр.

Сасă: Çавăнпа та унта машинăсем вырнаçтарса лартма та кансĕр!

Бекренев: Монтажниксем тĕрĕс калаççĕ. Çав условисенче машинăсене вырнаçтарса лартма питĕ кансĕр.

Юлашкинчен вăл трест хĕле çителĕксĕр хатĕрленни çинчен калакав тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ, строительство материалĕсене тустарса пĕтересрен стройка территоринче хурал тăрассине йĕркелеме кирлине палăртрĕ.

Бекренев юлташ СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерстви Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвасси çине çителĕксĕр пăхнине палăртрĕ.

Çакăн çинчен пухура ытти юлташсем те каларĕç. Трест руководителĕсем лартнă ыйтусем çине министерствăпа главк тимсĕррĕн пăхнă, строительствăна кирлĕ пулăшу паман.

Пухура СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министрĕн заместителĕ **Акимов** юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл министерствăпа главка, уйрăмах материалсемпе техника енĕпе япăх пулăшнăшăн, техникăлла документаци вăхăтра паманшăн критикленине тĕрĕс тесе йышăнчĕ. Министерство çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнать. Акимов юлташ пухура самокритика çителĕксĕр пулнине палăртрĕ,—пухура тухса калакансем строительство ĕçĕсене хăвăртлатма мĕн тума шухăшлани çинчен шарламарĕç. Çав вăхăтрах стройкăра çитменлĕхсем нумай: рабочисене культурăпа йăла условийĕсем туса парасси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, рабочисем кирлинчен ытларах пулин те, вĕсен ĕçне япăх йĕркеленĕ.

Çитес çул валли строительствăпа монтаж ĕçĕсен пысăк программине палăртса хунă. Катан пире çуса тасатас тата сăрласа илемлетмелли фабрикăна ĕçе кĕртмелле, çип арлакан тата икĕ корпуса, трикотаж комбинатне тума тытăнмалла, пурăнмалли çуртсемпе культурăпа йăла сурчĕсем чылай тумалла. Çак задачăсене ăнăçлă пурнăçламалли никĕс вăл 1953 çулхи строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне тултарни пулать. Çавна май, тесе палăртать Акимов юлташ, хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе пулнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Çав çитменлĕхсем трест руководителĕсен айăпĕпе пулнă. Пурăнмалли çуртсемпе энергетика никĕсне тăвасси строительсен тĕп задачи пулать. Ăна пурнăçламасăр, малалнехи ĕçсене ăнăçлă туса пыма çук.

Акимов юлташ трестăн производствăлла никĕсне çирĕплетме кирлине палăртать тата строительствăна çĕнĕрен механизмсем хушса пани çинчен пĕлтерет. Стройкăна механизмсем çителĕклĕ таранах пама, тет вăл, мерăсем йышăнаççĕ. Çак пулăшупа усă курса, строительство участокĕсенче ĕçсене тĕпрен лайăхлатас пулать.

Шупашкарти пир-авăр комбинатне хăвăрт та йÿнĕ тата лайăх тăвасси, ăна партипе правительство палăртнă срокра ĕçе кĕртесси—«Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн коллективĕн хисеплĕ тивĕçĕ.

Пренире çавăн пекех каменщиксен бригадирĕ Дружинин юлташ, монтаж участокĕн начальникĕ Батанов юлташ тата постройком председателĕ Краснов юлташ тухса каларĕç.

БКПС Чăваш обкомĕн секретарĕ Шманов юлташ строительсен задачисем çинчен каларĕ.

Актив пухăвĕ, строительствăпа монтаж ĕçĕсен çулталăкри программине пурнăçлача мероприятисем палăртса, решени йышăнчĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн поселокĕнчи Загородний урамри пурăнмалли çуртсем. Г. ЗИНЬКОВ фотоукерчĕкĕ.

Вырăнти Советсенче

Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн саккăрмĕш сессийĕ хулари ĕçсыннисене медицина пулăшăвĕ парас ĕç мĕнле тăни çинчен сÿтсе яврĕ.

Докладчиксем—хулари сывлăх пайĕн заведующийĕ И. Филиппов депутат тата сывлăха сыхлас ĕç енĕпе ĕçлекен яланхи комиссин председателĕ Н. Арзамасова депутат çак ĕçри ÿсĕмсемпе çитменлĕхсем çинчен каласа пачĕç.

Хулара хальхи вăхăтра медицина тата ача-пăча учрежденийĕсем 50 ытла. Медицина учрежденийĕсем оборудовани тĕлĕшĕнчен пуян. Юлашки вăхăтра хăшпĕр больницăсен çурчĕсене юсанă, вĕсенче чирлĕ çынсене вăхăтра тата кăмăллăрах йышăнаççĕ тата сывлăхĕсене тĕплĕнрех тĕрĕслеççĕ. Ĕçсыннисем хăйсене сыватнăшăн хулари чылай врачсене тав туса çырусем яраççĕ.

Анчах сывлăха сыхлас ĕçре çитменлĕхсем нумай-ха. Республикăн çĕнĕ больницине тăвас ĕç питех те вăраххăн пырать. Электроаппаратура заводĕнче тата Чапаевски поселокра кăçал поликлиникăсем лартма тытăнмалла, анчах вĕсене лартма панă укçапа начар усă кураççĕ. Хулари ача-пăча поликлиникинче рентген тата физиотерапи кабинечĕсем çук. Хальхи больницăсенче йывăр чирлĕ çынсене пурне те выртарма койкăсем çитмеççĕ тата ытти çитменлĕхсем те пур.

Сывлăха сыхлас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри хула Совечĕн исполкомĕпе унăн сывлăх пайĕ тата медицина учрежденийĕсен руководителĕсем çаврăнăçусăр ĕçлениинчен, ответлăха туйманнинчен килет.

Пренире тухса калакансем А. Степанова, М. Мерентяева, Ф. Дмитриева, В. Сергеева депутатсем медицина пулăшăвĕ парас ĕçри çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

Поликлиникăра шывпа тата пылчăкпа усă курса сыватас ĕç пусланначчĕ. Çав лечебницăсем кăçал виçĕ уйăх хушши — июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшĕччен çеç ĕçленĕ. Сăлтавĕ çапла: вĕсене хутса ăшăтма тата шыв хатĕрлеме вутă сахал параççĕ.

— Кун пек лечебницăсем республикăра урăх çук. Мĕншĕн-ха вĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттереймеççĕ?—ыйтать Степанова юлташ.

Чапаевски поселокĕнче çĕнĕ больница лартма кăçал 200 пин тенкĕ панă, çав укçаран халиччен 18 пин тенкипе çеç усă курнă. Çитес çулхи пĕрремĕш çурçуллăхра больница çуртне туса пĕтермелле. Анчах хула архитекторĕ Мамаев юлташ больница проекчĕсемпе сметисене хатĕрлесе парас ĕçе питех те вăраха янă. Поселокри хальхи больницăра рентген установки пур, анчах врач-рентгенолог çук. Шупашкар торгĕн поселокри уйрăмĕ больница валли кирлĕ апат-çимĕç илсе пымасть, илсе пырсан та аяккалла сутса пĕтерет.

Врачсем медицина ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем сахал туса параççĕ. Медснабăн республикăри уйрăмĕ больницăсене кирлĕ оборудование çителĕклĕ кÿрсе килмест.

Республика больницин главнăй врачĕ И. Сидnev депутат Чăваш АССР Сывлăх министерстви ĕçре сахал пулăшни çинчен каларĕ. Кăçал министерство груз турттармалли автомашинăсем илнĕ, вĕсенчен пĕрне те больницăна паман, çав вăхăтрах больница хуçалăхĕ пысăк, ăна машина питĕ кирлĕ.

— Пĕррехинче Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Андреев юлташ больницăна пырса курчĕ,—тет Сиднев юлташ,—анчах çавăнтан ниmĕнле йĕр те юлмарĕ. Эпир Министрĕсен Советĕнчен чылай ыйтусене татса пама ыйтрămăр. Анчах çав ыйтусем çине ниmĕнле ответ та илеймерĕмĕр.

СССР Верховнăй Совет депутачĕ, Чăваш АССР Сывлăх министрĕ В. Ефимова юлташ врачсене, фельдшерсене тата сестрасене марксизмла-ленинла теорие вĕрентес, вĕсен ăсталăхне ÿстерес ĕçсене лайăх организацилеме кирлине палăртрĕ.

Пренире З. Шигаева, А. Старостин депутатсем, А. Моисеев тата П. Ермолаев юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем шкул ачисене медицина пулăшăвĕ парас ĕçе аванрах йĕркелес, больницăсемпе диспансерсенче ĕç условийĕсене лайăхлатас, халăх хушшинче профилактикăлла ĕçе анлă сарас ыйтусем çинче чарăнса тăчĕç.

КОЛХОЗА ОРГАНИЗАЦИПЕ ХУÇАЛĂХ ТĔЛĔШĔНЧЕН ТĔРЕКЛЕТМЕ ТĂРĂШАÇÇĔ

Ял Советсен социализмла ăмăртăвĕнче Йÿçкасси ял Совечĕ (председателĕ М. Александров юлташ) 1953 çулта иккĕмĕш хут малти вырăна тухрĕ, район Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пырать. «Знамя коммунизма» колхоза вăйлатма çине тăрса тăрăшать. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене Октябрь уявĕ тĕлне вĕçлерĕ. Кăçал лаша тата ĕне витисем туса лартрĕ, радиоузел турĕ, икĕ автомашина туянчĕ.

Ял Совечĕ 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта финанс планне 101,1 процент тултарчĕ, тăваттăмĕш кварталти плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 80 процент пурнăçларĕ.

Ял Совечĕ халĕ колхоз çитес çуркунна хатĕрленес ĕçе, кĕрхинепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлемелли плана пурнăçлас ĕçе организацилесе пырать, тăваттăмĕш кварталта халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

С. ТИХОНОВ.

Муркаш районĕ.

Илья Эренбург Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗнче 1953 ҫулхи ноябрӗн 24-мӗшӗнче каланӑ сӑмах

Халӑхсен конгресӗ пуҫланнӑранпа ҫулталӑк иртрӗ. Ҫак вӑхӑт хушшинче мир ыйтӑвӗсем ӳсрӗҫ, тенӗ Эренбург. Анчах, тенӗ вӑл, хӑрушлӑх иртсе кайман-ха.

Ҫӗнӗрен юн юхтарма уҫҫӑнах чӗнсе калакан ҫынсен сассисем шӑпланман-ха. Атом энергийӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси председателӗ пулнӑ Дин господин Совет Союзне хирӗҫ атомлӑ хӗҫпӑшалпа усӑ курма сӗннӗ. Америкӑри промышленниксен «Коммонуэлс клаб» организацийӗ «превентивнӑй вӑрҫӑн» шухӑшне ырланӑ, сенатӑн ют ҫӗршыв ӗҫӗсем тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссийӗн председателӗ Уайли господин вара ҫакна ҫирӗплетсе панӑ: ҫавӑн евӗрлӗ шухӑшлании унӑн ҫӗршывӗнчи мул хуҫисем ырлаҫҫӗ, тенӗ.

Эпир Дин господина е вӑрҫӑ вӑрҫма юратакан бизнесменсене фанатиксен пӗчӗк кӑна ушкӑнӗ шутне кӗртме пултарнӑ пулсан, эпӗ кун ҫинче чарӑнса тӑман пулӑттӑм. Анчах анлӑн сарӑлакан хаҫатсем вӑрҫӑ вӑрҫма чӗнсе каланисене тепӗр хут калаҫҫӗ кӑна мар, ҫав чӗнӳсем ҫинчен час-часах кӑмӑлласа ҫыраҫҫӗ. Америкӑн ответлӑ ҫыннисем Дин господина ун евӗрлӗ ҫынсен декларацине сивлемеҫҫӗ, вӗсене мӗншӗн те пулин ӳпкелесе илеҫҫӗ пулсан, ытлашши хӗрсе кайнӑшӑн ҫеҫ ӳпкелеҫҫӗ. Хӑшпӗр государствӑсен ответлӑ ҫыннисен ӗҫӗсене эпӗ асӑннӑ ответлӑхсӑр чӗнӳсемпе танлаштарсан, эпир ҫакна калама пултаратпӑр: пирӗн умра тӗллевсем енчен уйрӑлса тӑни мар, темперамент тӗлӗшпе уйрӑлса тӑни ытларах палӑрать. Урӑ ҫыннӑн пуҫӗнчи шухӑш ӳсӗр ҫыннӑн чӗлхи ҫинче, теҫҫӗ. Дин господин вӑрҫӑ вӑрҫма чӗнни Даллес господина кӳрентермест, тесе шикленетӗп эпӗ.

Эренбург ҫакна палӑртнӑ: Даллес пӗлтернисене, ҫавӑн пекех ытти чылай государство деятелӗсен пӗлтернисен характерӗ улшӑннӑ. Ҫак улшӑну, государство деятелӗсен вӑрҫӑпа мир ыйтӑвӗсем ҫине пӑхасси улшӑннине пӗлтерет пулсан, ку вӑл пире савӑнтарма пултарӗччӗ, тенӗ вӑл. Анчах ҫак государство деятелӗсем хӑйсен ӗнерхи ӗмӗчӗсене пӑрахма шутламаҫҫӗ, вӗсен ҫавӑнпа пӗрлех общественность шухӑшне те шута илме тивет. Государство деятелӗсем «май» тупнӑ: пӗр тӗрлӗ каламалла, тепӗр майлӑ тумалла.

Хӑшпӗр государство деятелӗсем вӑрҫа хатӗрленессине вӑйлатса, ҫӗнӗ ҫар базисем туса тата хӑйсене пӑхӑнса тӑракан ҫарсене ӳстерсе, пӗр вӗҫӗмсӗр ҫак сӑмахсене калаҫҫӗ: «сӗнӳсем», «канашлусем», «калаҫусем», «шанӑҫсем...» Ҫак государство деятелӗсем мӗнле тӗллев тытаҫҫӗ-ха?

Пур ачасем те лайӑх пӗлекен юмахра, Перро юмахӗнче, кашкӑр, пӗчӗк хӗрачана ҫисе ярас тесе, хӗрача асламӑшӗн калпакне тӑхӑнать. Кашнинех ҫакна ӑнланать: совет халӑхӗ, вӑл хӗрлӗ тӗсе юрататать пулин те, айван хӗрлӗ ҫӗлӗк евӗрлӗ мар. Анчах, Совет Союзне улталас шутпа, хӑшпӗр государство деятелӗсем, мире юратнӑ пек туса кӑтартас тесе, хавхаланулла сӑмахсем калаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ҫӗршывӗсенчи ҫынсене лӑплантарасшӑн, Хӗвеланӑҫ Европӑри тата Америкӑри халӑхсене ҫакна ӗнентересшӗн: налогсем пысӑкланни, хӗҫпӑшалланасси ӳсни, тӗрлӗрен ҫар договорӗсем туни тепӗр енӗ туслӑ сӗнӳсене йышӑнманнинчен килет. Нимӗнле кашкӑрсем те асра та ҫук, ырӑ кӑмӑллӑ, чӑтӑмлӑ асанне тата питех те юнтармӑш «Хӗрлӗ Ҫӗлӗк» пур, тесшӗн вӗсем...

Хӑшпӗр государство деятелӗсен халӗ вӑрттӑн ӗҫсем тума тивни миршӗн тӑракансен вӑйӗ пысӑк пулнине кӑтартса парать. Анчах ҫак вӑрттӑнлӑх миршӗн тӑракансен сыхлӑхне вӑйсӑрлатни мӗнпур халӑхсемшӗн питӗ пысӑк инкек пулса тӑнӑ пулӗччӗ.

Эренбург хӑйӗн сӑмахӗнче ҫакна кӑтартса панӑ: США государство деятелӗсем, «калаҫусем» ҫинчен сӑмах вакласа, тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатас тесе сӗннӗ калаҫусене пӑсас шутпа, мӗн тума пултарнине йӑлтах тӑваҫҫӗ, тем тӗрлӗ сӑлтавсемпе те усӑ кураҫҫӗ.

Пӗрлешӳллӗ Штатсен государство деятелӗсем Китайӑн законлӑ представителӗсене Пӗрлешнӗ Нацисен Организаци ӗҫне хутшӑнтарассине тӗрлӗ майсемпе чарса тӑраҫҫӗ, Китая Европӑри, Америкӑпа Азири ҫӗршывсем хушшинче мирлӗ ҫыхӑнусем тытма чӑрмантараҫҫӗ.

Тепӗр ыйту — Германи ыйтӑвне илӗпӗр. Вӑл ыйтӑва татса парассишӗн тӑватӑ аслӑ держава—США, СССР, Англи тата Франци ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Пуртте пӗрлӗхлӗ, демократиллӗ тата мире юратакан Германи тумалла, тесе ҫирӗплетсе калаҫҫӗ. Ун ҫинчен миршӗн тӑракансем пӗр хутчен кӑна мар каланӑ. Халӗ хӑйсене калаҫусем майлӑ тӑракансем пек туса кӑтартма тӑрӑшакан государство деятелӗсем те ун ҫинчен час-часах калаҫҫӗ.

Мӗн пирки ӗҫ чарӑнса тӑрать-ха? Ырӑ кӑмӑлпа килӗшӳ тума килӗшмен пирки кӑна. Калаҫусем ҫинчен сӑмах хускатса, ҫавӑнпа пӗрлех ҫав калаҫусене усӑсӑр тӑвакан ӗҫсене пурнӑҫласа пыма юрамасть. Германие пӗрлештересси ҫинчен калаҫса татӑлма сӗнӳ парса, ку ҫӗршыв пайланса тӑнине ҫирӗплетме пулӑшакан, пайланса тӑрассине законлӑ тесе йышӑнтаракан ӗҫсене тума юрамасть... Хӑшпӗр государство деятелӗсем икӗпитленеҫҫӗ. Вӗсем, Германи ыйтӑвӗ тӑрӑх калаҫусем ирттерме сӗнсе, пӗр вӑхӑтрах Парижра тата Бонра тунӑ договорсене хӑвӑртрах ҫирӗплеттерессишӗн ҫине тӑраҫҫӗ. Кун пек икӗпитленни пуриншӗн те паллӑ.

Малалла Эренбург ҫакна кӑтартса панӑ: Америкӑри влаҫра тӑракан ушкӑнсем Корея ыйтӑвне, хӗҫпӑшалсӑрланасси тата чи малтан хӳтӗлӗхсӗр халӑха хӑратса тӑракан хӗҫпӑшалсемпе усӑ курма чарасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва татса парас ӗҫе чӑрмантараҫҫӗ. Пирӗн юлашки сесси пулнӑ вӑхӑтранпа, тенӗ малалла Эренбург, ҫак государство деятелӗсем тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатма кирли ҫинчен сахал мар каласрӗҫ. Ҫак вӑхӑт хушшинчех ҫак государство деятелӗсем тӗнчери лару-тӑрӑва йывӑрлатма кӑна пултаракан ӗҫсем сахал мар туса ирттерчӗҫ. Килӗшӳсем тума кӑмӑл пулни ҫинчен каласа, вӗсем Гитлерӑн союзникӗ пулнӑ тата унӑн ӗҫне малалла туса пыракан ҫынна килӗшӳ турӗҫ. Ҫак килӗшӳ пулма пултаракан агресси валли Испанирен плацдарм туса хурать. Мирлӗ калаҫусем ирттерме кирли ҫинчен каласа, вӗсем Скандинавирен, Ҫывӑх тата Вӑтам Хӗвелтухӑҫӗнчи тӗрлӗрен ҫӗршывсенчен хӑйсен ҫар базисем туса хурасси ҫинчен калаҫусем ирттереҫҫӗ. Хӑйсем тӳрӗ кӑмӑлпа мире юратни ҫинчен шантарса каласа, вӗсем Германи дивизийӗсене тепӗр хут тӑваҫҫӗ. «Европа ҫарне» хӑвӑртрах тӑвас тӗллевпе, Хӗвеланӑҫ Европӑри государствӑсене хытӑ хӗсеҫҫӗ. Пирӗн сесси йышӑнакан решенисенче, тенӗ юлашкинчен Эренбург, калаҫусемпе килӗшӳсем ҫинчен тӑракан ыйтӑва уҫҫӑнрах ҫутатса памалла. Ку решенисем тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатма пулӑшмалла, мире юратакан тӗрлӗ шухӑшлӑ ҫынсемшӗн, кирек хӑш ҫӗршыври патриотсемшӗн те—американецсемпе китаецсемшӗн, акӑлчансемпе вырӑссемшӗн, нимӗҫсемпе французсемшӗн юрӑхлӑ пулмалла. Халӑхсем пирӗн сӑмаха кӗтеҫҫӗ. Вӗсем мӗнпур ҫӗршывсенчи государство деятелӗсен пирӗн вӑя хисеплеме тивнине курса тӑраҫҫӗ. Вӑл деятельсенчен нумайӑшне эпир урӑхла калаҫтарма—мир ҫинчен калаҫтарма пултартӑмӑр. Эпир вӗсене урӑхла ӗҫсем тума—мир тума та хушӑпӑр.

Болгарире Совет Союзӗпе Болгари хушшинчи туслӑх уйӑхлӑхӗ ирттернӗ. Уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче Болгари Халӑх Республикинче совет культурин деятелӗсен делегацийӗ пулнӑ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: хӑнасем Сталин хулинчи ялхуҫалӑх выставкинче.

Болгари телеграф агентствин фотоӳкерчӗкӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗ

ВЕНА, ноябрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Дани представителӗ **Форхаммер** ноябрӗн 25-мӗшӗнчи каҫхи ларура чи малтан тухса каланӑ. Германи ыйтӑвне мирлӗ майпа татса пани питӗ кирлӗ ӗҫ пулнине палӑртса, вӑл Хӗвеланӑҫ Германие хӗҫпӑшаллантармалли политика Германи ыйтӑвне татса парас ӗҫре чӑрмав пулса тӑнине кӑтартса панӑ.

Форхаммер тӗнчери ыйтусене мирлӗ майпа татса пама аслӑ державӑсен канашлӑвне пухма кирли ҫинчен каланӑ.

Франци представителӗ **Мальтер** атомлӑ тата водородлӑ бомбӑсем, ҫавӑн пекех бактериллӗ тата химилле хӗҫпӑшалсем хуласемпе ялсене питех те нумай аркатма, ҫынсене йышлӑн вӗлерме пултарнине палӑртнӑ. Бактериллӗ вӑрҫӑ вӑрҫма чарасси ҫинчен Женева хулинче йышӑннӑ килӗшӗве Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви халиччен те ҫирӗплетменни ҫинчен астутарса, Мальтер ҫак килӗшӗве ҫирӗплетме США правительствине чӗнсе калама сӗнӳ панӑ.

Георгий Наджаков профессор (Болгари) хӑйӗн сӑмахӗнче ҫакна кӑтартса панӑ: Америкӑн ют ҫӗршывсен территорийӗсем ҫинчи ҫар базисем мир ӗҫӗшӗн пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑраҫҫӗ. Балкан ҫӗршывӗсенчи халӑхсем, тенӗ вӑл, тӗнчери пысӑк ыйтусене, вӑл шутра Германи ыйтӑвне халиччен те татса паманнишӗн пӑшӑрханаҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ калаҫусем ирттернипе пӗтӗм тӗнчере мир туса хурасси ҫинчен панӑ сӗнӗве пирӗн ҫӗршыв пӗтӗмӗшпех ырлать, тенӗ Наджаков.

Англи представителӗ **Фиггинс** сесси участникӗсене вӑрҫӑ чӗртекенсен чее те усал ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларма кирли ҫинчен аса илтернӗ. Вӑрҫӑ чӗртекенсем, хӑйсен чее те усал ӗҫӗсемпе усӑ курса, хӗҫпӑшалланасси вӑл кирлӗ ӗҫ тесе общественноҫа ӗнентерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Индулал Ягник (Инди) Инди халӑхӗ мир тӑвассишӗн хытӑ тӑни ҫинчен каланӑ. Корейӑри, Германири тата ытти ҫӗрти ӗҫсем пирки, Пӗрлешӳллӗ Штатсем ертсе пыракан хӗвеланӑҫри ҫӗршывсем хӗҫпӑшалланассине хӑвӑртлатма тӑрӑшнӑ пирки, Германипе Австри ыйтӑвӗсене мирлӗ майпа татса парасси ҫинчен, Корейӑра мир тӑвасси ҫинчен ырӑ кӑмӑлпа тата тӳрех калаҫусем ирттерме чӑрмантарма хӑтланнӑ пирки лару-тӑру йывӑрланса пынӑшӑн Инди халӑхӗ хытӑ пӑшӑрханать.

Америка империалисчӗсем, тенӗ малалла Индулал Ягник, Индие хӑйсен влиянине кӗртсе ӳкересшӗн, Франципе Португалин Индири ҫӗрӗсемпе хӑйсен ҫар базисене тунӑ ҫӗрте усӑ курасшӑн. Неру премьер-министр ҫак ӗҫсене — Индишӗн пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑракан ӗҫсене— татӑклӑн сивленӗ.

США, Пакистан правительствипе ҫар союзӗ туса, Пакистан территорийӗ ҫинче ҫар базисем тума хытӑ тӑрӑшать. Пӗтӗм Инди США-н ҫакӑн пек ирсӗр ӗҫӗсем пирки хытӑ тарӑхать. Индулал Ягник ҫакна кӑтартса панӑ: Индире ирӗклӗхпе мире хӳтӗлессишӗн пыракан патриотла юхӑм ӳсет, Китай Халӑх Республикипе, Совет Союзӗпе тата ытти ҫӗршывсемпе туслӑ ҫыхӑнусем тытасси ҫирӗпленет.

Нимӗҫсен паллӑ писательници **Анна Зегерс** хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каланӑ: Демократиллӗ Германи Республикин мирлӗ пурнӑҫне пӑсас тесе, мир тӑшманӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйне хураҫҫӗ. «Сивӗ вӑрҫӑн» стратегӗсем Демократиллӗ Германи Республикин территорийӗнче шпионла центрсем тӑваҫҫӗ. Вӗсене Бонн правительстви е тӳрех Вашингтон укҫа парса тӑрать. Анчах, мир тӑшманӗсен мӗнпур чее те усал ӗҫӗсене пӑхмасӑр, тенӗ А. Зегерс, Демократиллӗ Германи Республики мирлӗ строительство ҫулӗпе ҫирӗппӗн пырать, халӑхӑн пурнӑҫ шайне куллен ӳстерет.

Анна Зегерс миршӗн тӑракан мӗнпур ҫынсене демократиллӗ никӗс ҫинче пӗрлӗхлӗ Германи, Европӑри мире тата хӑйӗн кӳршисен хӑрушсӑрлӑхне хӑратса тӑман Германи, тӑвассишӗн татӑклӑн тӑма чӗнсе каланӑ.

Ҫак ларура ҫавӑн пекех **Мусарай** (Албани), **Джесси Стрит** (Австрали) тухса каланӑ.

ВЕНА, ноябрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Ирхи лару Англи представителӗ **Теодор Гаррис** сӑмах каланипе уҫӑлнӑ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ Германие хӗҫпӑшаллантарассине хирӗҫ тӑрӗ тесе хӑй шанса тӑнине палӑртса, Гаррис ҫапла каланӑ:

Паян эпир хӗҫпӑшалсӑрланма, атомлӑ тата водородлӑ бомбӑсемпе усӑ курма чарма требовани лартатпӑр. Ку вӑл—виҫҫӗмӗш тӗнче вӑрҫине сирсе ямалли пӗрремӗш утӑм.

Ун хыҫҫӑн **Салазар Сантоса** (Колумби) сӑмах параҫҫӗ. Вӑл палӑртнӑ тӑрӑх, Латинла Америкӑри ҫӗршывсен представителӗсем Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнче Пӗрлешӳллӗ Штатсене пулӑшнине, ҫак ҫӗршывсенчен хӑшпӗрисем Корейӑна ҫарсем янине, Китай Халӑх Республикине йышӑнма килӗшменнине ҫакӑнпа ӑнлантарса пама пулать: Латинла Америкӑри государствӑсенчен нумайӑшӗнче реакциллӗ ушкӑнсем пуҫ пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем Пӗрлешӳллӗ Штатсен государство департаменчӗн мӗнпур кӑтартӑвӗсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Анчах правительствӑсен позицийӗ Латинла Америкӑри ҫӗршывсенчи халӑхсен чӑн-чӑн шухӑш-кӑмӑлне палӑртса тӑмасть.

Камерун представительници **Жанна Эболло** 1952 ҫулта ҫӗршывра мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комитет туса хуни ҫинчен пӗлтернӗ. Камерунри миршӗн тӑракансем официальнӑй пропагандӑна хирӗҫ татӑклӑн кӗрешеҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери халӑхсен, тенӗ хӑйӗн сӑмахӗнче Португали представительници **Мария Ламас**, вӑрҫа хирӗҫ татӑклӑн тӑмалла тата хӑйсен правительствисем умне тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатма пулӑшма требовани лартмалла. Ку вӑл нумай вӑхӑта пыракан мир тӑвас ӗҫӗн пӗртен-пӗр шанӑҫӗ пулса тӑрать.

Монголи ученӑйӗ **Дамдин-Сурун** Жолио-Кюри пилӗк аслӑ державӑсен представителӗсен тӗлпулӑвне хӑвӑртрах ирттерме кирли ҫинчен каланине Монголи халӑхӗ ячӗпе ырланӑ. Вӑл Монголи Халӑх Республикин халӑхӗ Корейӑн паттӑр халӑхӗпе пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулнине палӑртнӑ. Корея ыйтӑвӗ тӗлӗшпе политикӑлла конференцие пухассине хӑвӑртрах туса ирттерме чӗнсе каланӑ. Ҫак политикӑлла конференци пухассине хӑвӑртрах туса лӗсем тата интересленекен пилӗк нейтральнӑй государствӑсен представителӗсем хутшӑнмалла.

Фермин Беретервид (Аргентина) Латинла Америкӑн ҫак ҫӗршывӗнчи миршӗн тӑракансем тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен каласа панӑ.

Ун хыҫҫӑн трибуна ҫине Крутицки тата Коломенски митрополит **Николай** хӑпарать. Вӑл ҫапла калать: вырӑссен православнӑй чиркӗвӗ пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле тӗнчипех мир тӑвас текен шухӑшпа пурӑнать.

Юлашкинчен Николай митрополит ҫапла каланӑ:

«Эпӗ кунта вырӑссен православнӑй чиркӗвӗ ячӗпе килтӗм. Православнӑй чиркӳ пирӗн пӗтӗм халӑхпа пӗрле тӗнчери мӗнпур ыйтусене мирлӗ майпа татса памалла текен шухӑша, пилӗк аслӑ державӑн паллӑ представителӗсен тӗл пулмалли ҫинчен каланӑ шухӑша ырлать. Эпӗ хамӑн тӑвансене—Европӑри, Америкӑри, пӗтӗм тӗнчери христиансене те ҫавӑн пек тума чӗнсе калатӑп».

• • •

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗн ирхи ларӑвӗнче ҫавӑн пекех **Халлдор Лаконесс** (Исланди), **Балтасар Кастро** (Чили), **Хабиби** (Израиль), **Санчес Аркас** (Испани), **Эржбет Андич** профессор (Венгри), **Николас Гильен** (Куба), **Феноальтеа** профессор (Итали) тухса каланӑ.

А. Сурков Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗнче 1953 ҫулхи ноябрӗн 25 мӗшӗнче каланӑ сӑмах

Тӗнчери хальхи йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатмалли майсем шырас тӗлӗшпе ирттерекен кирек мӗнле обществӑлла дискуссире те хӗҫпӑшалсене чакарассишӗн тата халӑха йышлӑн вӗлермелли хӗҫпӑшала чарассишӗн кӗрешес ыйтусене ирӗксӗрех лартаҫҫӗ.

Ман шутпа, тет А. Сурков, ку вӑл ҫакӑн пирки пулать: васкаса хӗҫпӑшалланасси тӗнчери ҫӗршывсем хушшинче йывӑр лару-тӑру пулса тӑнӑ пирки пуҫланса кайнӑ. Васкаса хӗҫпӑшалланасси питех те сарӑлса пыни вара тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва татах йывӑрлатакан яланхи ҫӑлкуҫ пулса тӑнӑ.

Атомлӑ тата водородлӑ хӗҫпӑшал пирки те ҫавнах калама пулать.

А. Сурков ҫакна кӑтартса парать: васкаса хӗҫпӑшалланассине вӑйлатса пынишӗн Америкӑпа Англи блокӗ айӑплӑ. Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнчи хальхи вӑхӑтри ытларахӑшӗн лидерӗсем, тет вӑл, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче «сивӗ вӑрҫӑ» организаторӗсем пулса тӑчӗҫ. Вӗсем васкаса хӗҫпӑшалланас ӗҫе пуҫарчӗҫ тата ӑна хӑвӑртлатса пычӗҫ. Атомлӑ бомбӑна вӗсем хӑйсем шутласа кӑларнӑ «коммунистла агрессие» «тытса чармалли» чи лайӑх меслет вырӑнне хураҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл хӗҫпӑшалсене чакарас тата халӑха йышлӑн пӗтермелли хӗҫпӑшала чарас ыйтусем тӗлӗшпе вӗсем йышӑнакан позицире палӑрмасӑр юлма пултарайман.

Хӗҫпӑшалсене чакарассине хирӗҫ тата халӑха йышлӑн пӗтермелли хӗҫпӑшала чарассине хирӗҫ тӑракансен чее меслечӗсем ҫинчен А. Сурков тӗплӗн чарӑнса тӑнӑ. ООН комиссийӗсенче Англипе Америка енӗ тӗрлӗ вӑхӑтра хатӗрленӗ плансенче, тенӗ вӑл, шухӑша тӳрӗ кӑмӑлпа каламанни, хӗҫпӑшалсӑрланас ыйтусене тӳрех хартасран пӑрӑнма тӑрӑшни палӑрса тӑрать.

Усӑ тӗллев—халӑха йышлӑн пӗтерекен хӗҫпӑшала чарас тата хӗҫпӑшалсене чакарас—вырӑнне хӗҫпӑшалсене палӑртас, шута илес, ҫырса тухас, тӗрӗслесе тӑрас задачӑсем кӑларса лартнӑ. Ҫакна ӑна хӗҫпӑшалсене чакарасси ҫинчен тата атомлӑ хӗҫпӑшала чарасси ҫинчен панӑ сӗнӳсене йышӑнтарас мар шутпа тунӑ.

Америкӑн юлашки проектӗнче те ҫав ҫитменлӗхсемех палӑраҫҫӗ. Ку проекта вара ООН Генеральнӑй Ассамблейин сессийӗ темшӗн Франци делегацийӗн ячӗпе тӑратнӑ.

Халӑха йышлӑн пӗтерекен хӗҫпӑшала чарас тата хӗҫпӑшалсене чакарас ыйтупа Совет Союзӗ панӑ сӗнӳсем ҫинчен каласа, А. Сурков ҫав сӗнӳсен тӗп шухӑшӗ ҫакӑн пек пулнине кӑтартса панӑ: тӗп ӗҫрен пуҫламалла—ҫӗршывсен тата правительствӑсен атомлӑ, водородлӑ хӗҫпӑшалпа тата халӑха йышлӑн пӗтерекен ытти хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасси ҫинчен йышӑнмалла, ҫав хӗҫпӑшалпа чи малтан усӑ куракан правительствӑсене вӑрҫӑ преступникӗ тесе шутласси ҫинчен пӗлтермелле.

Ҫакӑн пек йӗрке тума йышӑнмалла: ҫӗршывсемпе правительствӑсен паллӑ пропорципе тата палӑртнӑ йӗркепе хӗҫпӑшалсене тата хӗҫпӑшаллӑ вӑйсене чылай чакармалла.

Ҫак тӗллеве палӑртса обязательство вырӑнне йышӑннӑ хыҫҫӑн, килӗшӳ тӑвакан енӗсем пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах ҫав решенисене хӑвӑрт тата тӗрӗс пурнӑҫа кӗртме май паракан условисем туса хатӗрлеме тытӑнаҫҫӗ. Урӑхла каласан, хӗҫпӑшалсене шута илме, тӗрӗслесе тӑмалли объектсене палӑртма, ҫирӗп тӗрӗслесе тӑма тата инспекци тума тытӑнаҫҫӗ Правительствӑсем пӗлтернӗ объектсене тӗрӗслесе тӑма кӑна мар, правительствӑсем пӗлтермен, анчах пӗтӗм тӗнчери контроль органӗсем пур тесе шутлакан объектсене тупса палӑртма та право пулмалла.

Нумай ҫулсем хушшинчи усӑсӑр дискуссисенче, ООН-ӑн органӗсенче, тӗнчери ҫӗршывсенчи хаҫатсенче ку ыйту тӗлӗшпе нимӗн те уҫҫӑн татса каламарӗҫ пулсан, асӑннӑ сӗнӳ ыйтӑва татса памалли чи усӑ та кал-кал схема пулса тӑмасть-и вара?

Совет Союзӗнчи халӑхсем, тенӗ малалла А. Сурков, халӑхсен хушшинчи миршӗн тӑраҫҫӗ. Пирӗншӗн пулсан мир вӑл эпир 36 ҫул каялла палӑртнӑ юлашки тӗллев патне пӗр татти-сыпписӗр тата ӳсе пыракан хӑвӑртлӑхпа куҫса пыни пулать. Вӑрҫӑсем вара тӗллев патне пӗр татти-сыпписӗр куҫса пыма чараҫҫӗ, тӗллев патне пымалли ҫул ҫинче чарӑнса тӑма тивет. Эпир ҫакна халиччен пире хирӗҫ пуҫланӑ вӑрҫӑсен опычӗнчен пӗлетпӗр.

Темиҫе ҫул каярах эпир атомлӑ бомбӑпа усӑ курма чарма требовани лартсан, ҫав тискер хӗҫпӑшала тытакансем, пирӗн ҫине пӳрнепе тӗллесе кӑтартса, ҫапла калатчӗҫ: вӗсен ку хӗҫпӑшал ҫук, унтан хӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем унпа усӑ курма чарасшӑн.

Унтан ҫакӑн пек вӑхӑт ҫитрӗ: хӗҫпӑшалсӑр тӑрса юлас мар тенӗ пирки пирӗн атомлӑ хӗҫпӑшал пулса тӑчӗ. Ун чухне вара бомбӑсен пысӑк запасӗсене тытса тӑракансем, эпир малтанхи пекех ҫак вилӗм кӳрекен хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарма требовани лартнине курса, ҫапла каларӗҫ: эпир водородлӑ бомба хатӗрлетпӗр, вӗсем унтан хӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем ку хӗҫпӑшалпа усӑ курма чарасшӑн.

Юлашкинчен ҫакӑн пек вӑхӑт ҫитрӗ: хӗҫпӑшалсӑр тӑрса юлас мар тенӗ пиркипех пирӗн водородлӑ бомба та пулса тӑчӗ.

Атомлӑ тата водородлӑ бомбӑсем тытса тӑрас тӗлӗшпе ӗнерхи монополистсем халӗ монополистсем пулса тӑмаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн пирӗн позицисем мӗн тери вӑйланнине питӗ лайӑх пӗлсе тӑрса, эпир ҫак агрессилле тискер хӗҫпӑшала чарса лартма малтанхи пекех ҫине тӑрса, пӗрмаях требовани лартатпӑр, малашне те ҫавӑн пекех тӑвӑпӑр. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Эпир этемлӗхе тата унӑн пуласлӑхне ӗненетпӗр, этемлӗх ӑсӗ маниаксен ӑссӑрлӑхне ҫӗнтерессе ӗненетпӗр. Ҫавӑнпа та эпир ҫакнашкал требовани лартатпӑр.

Эпир ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи ырӑ ӑс-тӑнлӑ мӗнпур ҫынсемпе пӗрле тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатма хамӑр мӗн тума пултарнине пурне те тӑвасшӑн, ҫак тӗллевпе калаҫусенче, пӗр-пӗриншӗн тивӗҫлӗ никӗс ҫинче, мир ӗҫӗшӗн усӑллӑ пулсан, пур ыйтусем тӑрӑх та чакма хатӗр Ҫакна эпир вӑйсӑрриссен нушипе мар, вӑйлиссен, хӑйсен пуласлӑхне ӗненсе тӑракансен, мирлӗ творчествӑлла ӗҫӗн ҫулӗсем ҫинче хӑйсен историллӗ тӗллевӗсем патне ҫитме пултаракансен мухтавлӑ правипе ҫавӑн пек тӑвасшӑн. Пирӗнпе калаҫса татӑлма пулать, анчах пире хушса тӑма май ҫук.

Тӗнчери халӑхсен организацийӗнчи обществӑлла шухӑш-кӑмӑлӗ пилӗк аслӑ державӑн—США, Великобритани, Франци, СССР тата Китай—правительствисене ҫаврака сӗтел хушшине ларма тата хӑйсен хӗҫпӑшалӗсем ҫинчен калаҫса татӑлма хистесен, ҫакӑ вӑл мир ӗҫӗшӗн питех те пысӑк ҫӗнтерӳ пулать. Анчах та хӗҫпӑшалсене чакарасси ячӗшӗн ҫеҫ пулмалла мар, хӗҫпӑшалсене чӑннипех, нумай чакармалла. Ҫакӑ вӑл тӳрех государствӑсен бюджечӗсенче палӑртӑр, ҫар расхочӗсене чакарма, мирлӗ ӗҫсем валли ытларах укҫа-тенкӗ уйӑрма май патӑр.

Хӗҫпӑшалсене чакарасси ҫинчен тата атомлӑ, водородлӑ хӗҫпӑшала чарасси ҫинчен килӗшӳ тусан, интересленекен ҫӗршывсен правительствисем ҫав килӗшӗве тунипе халӗ тӗнчери лару-тӑрӑва йывӑрлатса тӑракан ыйтусем тӗлӗшпе малашне решенисем йышӑнма лайӑх условисем туса хурӗҫ.

Этемлӗх пичӗ ҫине тӗллесе тӑракан пӑшал кӗпҫисем сахалтарах пулсан, этемлӗх хӑйӗн хальхи вӑхӑтри тата пуласлӑхӗн ыйтӑвӗсене лӑпкӑнрах тата малашнехине курса тӑрса татса пама пултарӗ (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Улатӑр художникӗсем патӗнче

Пысӑках мар пӳлӗм стенисем ҫинче тӗрлӗ картинӑсем, эскизсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Кӗрсенех паллӑ, кунта художниксем ӗҫлеҫҫӗ.

...Пысӑк чӳрече ҫывӑхӗнче хӗрлӗ пусма витнӗ сӗтел. Ун умӗнче Совет Союзӗн Геройӗн Хӗрлӗ Ҫӑлтӑрне ҫакнӑ ҫын пӗр хускалмасӑр тӑрать. Умра ларакан ҫынсене ҫав тери хавхаланса, чуна витӗмлӗ сӑмахсем каланӑн туйӑнать вӑл. Паллах, ку пропагандист. Анчах унӑн умӗнче хальхинче кружок занятийӗнче итлесе ларакансем мар, аллине мольберт, темиҫе висточка тытнӑ художник. Вӑл пропагандистӑн портретне ӳкерет, ӑна ӗҫре, вӗренекенсем умӗнче хавхаланса каланӑ чухнехи пек кӑтартассишӗн тӑрӑшать.

Совет Союзӗн Геройӗ П. Макаров юлташ Улатӑр хула Совечӗн членӗ, активлӑ общественник. Вӑл темиҫе ҫул ӗнтӗ пропагандист пулса парти историне вӗренмелли кружока ертсе пырать. Вӗренекенсем вӑл ирттерекен занятисене питӗ юратса ҫӳреҫҫӗ, тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ. Е. Ноздрин художник П. Макаров пропагандист ӗҫне кӑтартса пама унӑн портретне ӳкерет.

Е. А. Ноздрин художник—портретист. Вӑл РСФСР-ти художниксен Мускавра пулнӑ тӑватӑ выставкине хутшӑннӑ. Унӑн «Весенний пейзаж», Мичурин фельдшер портречӗ, «На избирательном участке», художник-педагог Н А. Каменщиков, паллӑ лесосплавщик И. М Атемасов портречӗсене выставкӑра пысӑка хурса хакланӑ. Чылай картинӑсене Шупашкарти художество галлерийине, краеведени музейне илнӗ. «На избирательном участке» картинӑна Мускава илнӗ.

Кӑҫал Е. Ноздрин художник творчествӑлла командировкӑра пулнӑ. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулне кӑтартакан хӑйӗн «1941 год» ятлӑ произведенийӗ валли материалсем пухнӑ.

Скрябин художник та кӑҫал творчествӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳ тӑвассишӗн чылай тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл республикӑри ӗҫҫыннисен паянхи пурнӑҫне, вӗсен пархатарлӑ ӗҫне сӑнласа кӑтартас тӗлӗшпе темиҫе картина тунӑ. Халӗ «Путь Ильича» колхозра «Колхозный клуб» картина ӳкерет.

Ватӑ художник-педагог Н. Каменщиков художниксен мастерскойӗнче час-часах пулать, хӑйӗн паха опычӗпе ҫамрӑк художниксене паллаштарать. Ҫав вӑхӑтрах вӑл нумай ӗҫлет. Ҫак кунсенче темиҫе пейзаж ҫырса пӗтернӗ

Улатӑрти художниксем творчество енӗпе ӗҫленипе пӗрлех обществӑлла ӗҫе те хастарлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Предприятисенче рабочисем хушшинче час-часах пулаҫҫӗ.

М. НИКОЛАЕВ.

100 ҫулхи колхозник

ШАХАСАН. Вӑтакас Кипечри «Память Ильича» колхозри колхозник Тихон Петрович Петров кӑҫал 100 ҫул тултарчӗ. Пӗлтӗр вӑл 211 ӗҫкунӗ тунӑ.

Кӑҫал колхоз утарӗнче ӗҫлерӗ. Ку таранччен 127 ӗҫкунӗ тунӑ.

Ф. СТЕПАНОВА.

Ҫӗнӗ спектакль

Иртнӗ вырсарникун Чӑваш государство академи театрӗ Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Л Родионов ҫырнӑ «Юратнӑ хӗр» ятлӑ пьесӑна пӗрремӗш хут кӑтартрӗ.

Пьесӑри тӗп рольсене Чӑваш АССР халӑх артисчӗ А. Ургалкин, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗсем—Р. Ананьева, А. Долгова, Т. Евсеева, Л. Семенов тата ытти артистсем выляҫҫӗ. Спектакле лартма театрӑн главнӑй режиссерӗ Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ К. Иванов хатӗрленӗ, художникӗ — В. Гунько, музыкине А. Васильев-Асламас композитор йӗркеленӗ.

Спектакль курма халӑх нумай ҫӳрет. Куракансем спектакле юратса пӑхаҫҫӗ.

Е. НИКИТИН.

Редактор заместителӗ
М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ — ноябрӗн 28-мӗшӗнче вырӑсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуҫланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрӗн 28-мӗшӗнче ҫӗнӗ илемлӗ фильм «Серебристая пыль».

Хаҫат-журнал ҫырӑнса илӗр!

Шупашкарта пичетленсе тухакан ҫак хаҫатсемпе журналсене 1954 ҫулта илсе тӑма пур граждансем те ҫырӑнса илме пултараҫҫӗ:

„Коммунизм ялавӗ“, **„Советская Чувашия“,**
„Молодой коммунист“, **„Ҫамрӑк коммунист“,**
„Агитатор блокночӗ“ (вырӑсла тата чӑвашла),
„Ялав“ журнал, **„Тӑван Атӑл“** альманах.

Уйрӑм ҫынсем «Союзпичет» уйрӑмӗсенче тата почтӑсенче ҫырӑнса илме пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех письмоносецсем граждансен килӗсенче, хаҫат-журнал сарма уйӑрнӑ ҫынсем фабрикӑсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышӑнаҫҫӗ.

Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденисен, колхозсемпе МТС-сен службӑра усӑ курма тата пӗрле вуламалли вырӑнсенче усӑ курма хаҫатсемпе журналсем «Союзпичетӗн» районсемпе хуласенчи уйрӑмӗсенче ҫырӑнса илмелле.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, обзорсен пайӗ—6-84, пропаганда пайӗ—5-21, ял хуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство [illegible]—0-23.

НТ 09030

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Заказ № 2830. Тираж 20,000 экз.